43-191



А. С. ОТАЧКИН

# ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

*ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1943

А. С. ОТАЧКИН

3528

# ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

*ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ*

ПĔРРЕМĔШ ÇУЛ ВАЛЛИ

УЛТТĂМĔШ ИЗДАНИ

*Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссариачĕ çирĕплетнĕ*

5
ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Ч... ...шской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1943



## Хĕллехи ир.

Ирхи сивĕ пит-куçа
чĕпĕтет те чĕпĕтет.
Уяр, сивĕ сывлăшра
çуна сасси илтĕнет.
Шăннă, пăрлă йывăççем
шавламасăр лараççĕ.
Пас айĕнчи туратсем
темле мăннăн курăнаççĕ.
Ял çумĕнчи вăрманта
кайăк сасси илтĕнмест.
Сумка çакнă шкул ачи
шкула чупать, ÿркенмест.




## Шкула.

Хӗвел йăл-йăл кулчӗ,
пăхрӗ кантăкран.
Ванюка вăл курчӗ,
саврӗ кăмăлтан.
Тăхăнчӗ, тумланчӗ
Ванюк васкаса,
шкулалла чуптарчӗ
савăнса, кулса.

## Санăн вӗренме каймалла.

Çемен пичче колхоз правленинче ларать. Правление хӗрача чупса кӗчӗ.

— Мӗн-ха? Эсӗ мӗншӗн шкула кайман паян?—тесе ыйтрӗ унран Çемен пичче.

— Мана анне ячӗ... Хăй вырăнне... Ӗнесем сума... Анне чирленӗ...

— Ёне сума? Ёнесене сансӑр пуҫнех сӑваҫҫӗ. Аннӳ вырӑнне урӑххи кайрӗ. Аннӳне ҫаплах кала.

— Эпӗ те ёне сума пӗлетӗп,—терӗ Укҫине, кӑмӑлсӑр пулса.

— Саншӑн кам ҫырӑва вӗренӗ вара? Аннӳ вырӑнне урӑх ҫынна ярӑпӑр, сан вырӑнна ниепле те ҫын яма пулмасть,—терӗ колхоз председателӗ.

Вара Ҫемен пичче пӗчӗк Укҫинене шкула чупма хушрӗ.

## Ӑмӑрту.

Урок пуҫланиччен учитель ачасене пуҫтарчӗ те кашни ачан сумкине, кӗнекисене, сӑмса тутрисене пӑхса тухрӗ.

Паллян кӗнекисем те, сумки те тасах мар. Анюк чӗрнисене касмасӑр пынӑ. Мишӑн сӑмса тутри хуралса кайнӑ.

Пур ачасене те пӑхса тухсан, учитель урок пуҫларӗ. Кӗнекере социализмлӑ ӑмӑрту ҫинчен ҫырнине вуласа пачӗ. Вара ачасене ӑмӑртса ӗҫлесси ҫинчен каласа ӑнлантарчӗ.—Социализмлӑ ӑмӑртӑва Ленинпа Сталин пуҫарса янӑ,—терӗ вӑл юлашкинчен. Учитель каласа пӗтерсенех, Верук тӑчӗ те:— „Эпӗ Мишӑна ӑмӑртӑва чӗнетӗп. Вӑл шкула кая юлса ҫӳрет. Тетрачӗсене те таса тытмасть“,—терӗ.

Анюк ыран чӗрнисене касса, аллисене, питне-куҫне таса ҫуса килме пулчӗ. Паллянa ӑмӑртӑва чӗнчӗ. Ҫапла ачасем, пурте

пĕрне-пĕри ăмăртăва чĕнсе, ыранхи кунах шкула тап-таса килме, малашне тасалăха çирĕп тытма пулчĕç.

Тепĕр кунне ăмăрту мĕнле пынине тĕрĕслерĕç. Пĕр ача та урокран юлман, сумкăсемпе сăмса тутрисем пурин те таса пулнă. Хура питли, вăрăм чĕрнелли пĕр ача та пулман.

*Ăмăртса ĕçлер. Вĕренÿре ударниксем, отличниксем пулар.*

## Х ĕ л.

(Юмах)

Хĕл мĕнпур чĕрчуна пĕтерме шут тытрĕ. Малтанах вăл вĕçен кайăксене тапăнчĕ. Анчах вĕçен кайăксем ăшă çĕре вĕçсе кайрĕç. Хĕлтен хăтăлчĕç.

Вара хĕл тискер кайăксемпе выльăхсене тапăнчĕ. Çĕре юрпа витсе хучĕ, сивĕсем яра пуçларĕ. Анчах тискер кайăксем те хĕлтен хăрамарĕç. Пĕрисен тирĕ ăшă. Теприсем тарăн йăвана кĕрсе выртрĕç. Килти выльăхсем ăшă витесенче апат çисе тăраççĕ.

Хаярланса кайрĕ хĕл. Пулăсене пĕтерме шутларĕ. Шыва шăнтма тытăнчĕ. Анчах шы-

вӗ ҫиелтен ҫеҫ шӑнать. Пулӑсем шыв тӗпне анса выртрӗҫ. Пӑр айӗнче вӗсене сивӗ мар.

Хайхи хӗл ҫынна тапӑнчӗ. Пӳртсене шаккать, мӑръесенче улать. Ҫынсем кӑмака хутса ячӗҫ. Ашӑ пӳртре лараҫҫӗ, хӗлтенех кулаҫҫӗ.

Пӗчӗк ачасем те хӗлтен хӑрамаҫҫӗ. Ҫунашкапа, конькипе ярӑнаҫҫӗ. Юрпа выляҫҫӗ, юртан тӑвайкки купалаҫҫӗ. Шыв сапаҫҫӗ. Хӗле хӑйсене пулӑшма чӗнеҫҫӗ. — Тӑвайккине шӑнтса пар, сивӗ мучи,—теҫҫӗ.

*Шурӑ ҫитти пӗтӗм хире витсе хучӗ.*

## Ҫапла-и, ҫапла мар-и?

Урай ҫинче труба ларать—
тӗтӗме туртать.
Пӳрт тӑрринче кӑмака ларать—
пӳрте ӑшӑтать.

## Конькипе.

Вӗҫсе пырап конькипе—
хӑлхасем хӗп-хӗрлӗ.
Чӑр-чар чӗрсе пынипе
пӑр ҫийӗ пит йӗрлӗ.



Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
савăнса ярнатпăр.
Астумасăр хăш чухне
такăнса ӳкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
çиçĕм пек вĕçетпĕр.

## Кая юлчĕç.

Ачасем ушкăнпа шкула каяççĕ. Акă, шкул патне çывхараспа, вĕсем юрпа выляма тытăнчĕç. Пĕрне-пĕри юр чăмăрккисемпе переççĕ. Юр чăмăрккисем вĕлт те вĕлт çеç тăваççĕ.

Хĕрсе кайнипе, ачасем чылайччен вылярĕç. Вăйă хушшинче вĕсем шкул çинчен мансах кайнă. Шкула чупса çитеççĕ те, унта уроксем пуçланнă.

Вăйă пирки ачасем урокран тăрса юлнă.

— Ачасем, вăйă пирки урокран тăрса ан юлăр. Вĕренекенĕн, рабочи пекех, ĕçе вăхăтра тытăнмалла,—терĕ учитель.

*Вĕренекенĕн, рабочи пекех, ĕçе вăхăтра тытăнмалла.*



## Пирĕн ёлка.

Пирĕн ёлка питĕ капăр,
симĕс-симĕс йĕпписем.
Çĕн çул каçĕ савăнатпăр
эпир—çамрăк ачасем.

Ёлка, ёлка, эсĕ килтĕн
пысăк, аслă вăрмантан.
Çĕн çул каçĕ эсĕ çитрĕн,
пире саврăн кăмăлтан.

Ав мĕн чухлĕ тутлă çимĕç,
ав мĕн чухлĕ кучченеç.
Теттўсем сан хĕрлĕ, симĕс,
пире савăнăç кўреç.

Сана пурте пит саватпăр,
эпир—санăн хăнусем.
Халь вылятпăр, халь юрлатпăр,
халь ташлатпăр ташăсем.

Пирĕн ёлка питĕ капăр,
симĕс-симĕс йĕпписем.
Çĕн çул каçĕ савăнатпăр
эпир—çамрăк ачасем.

## Шывран кӗленче туни.

Ачасем шкул картишӗнче юртан пӳрт тума тытӑннӑ. Стенисене тунӑ, тӑррине витнӗ. Кантӑкӗсем çеç çук.

— Кантӑкӗсене мӗнрен тӑвас?—теççӗ.

Кантӑкӗсене шывран тума шутларӗç.

Мӗтри калать:

— Кантӑкне тӗрлӗ тӗслӗ тума пулать. Айтӑр шыв çине сӑрӑ ярса шӑнтар,—тет.

Ачасем икӗ листа тимӗр татӑкӗ илчӗç, хӗррисене тавӑрчӗç. Тимӗр листасем çине шыв ячӗç. Пӗр листи çине хӗрлӗ сӑрӑ, тепри çине синька ярса хутӑштарчӗç. Листисене сивӗ çӗре лартрӗç. Шыв шӑнса ларчӗ.

Тепӗр кунне шӑннӑ пӑра уйӑрса илме тӑчӗç, анчах пӑрӗ уйӑрӑлмасть. Тимӗр листисене пӳрте илсе кӗчӗç. Пӑр кӑшт ӑшӑнсан, ачасем листисене ӳпӗнтерчӗç те, пӑрӗ кӑлт анчах тухса ӳкрӗ.

Кантӑк пулса та тӑчӗ.

Ачасем юртан тунӑ пӳрте тӗслӗ кантӑксем лартма чупрӗç.

### *Мӗн вӑл?*

*Вутра та çунмасть,*
*шывра та путмасть.*

## Плотниксен юрри.

Ăмасене касатпăр,
ирех çапла ĕçсем:
çивĕчĕ пĕчĕк пăчкă
çăмăл пырать вĕçсе.
Кăшăл-кăшăл ту,
тук-тук-тук!
Чупать сава канмасăр,
якатать йывăça,
çавра шап-шур турпасĕ
ÿкет кустаранса.
Кăшăл-кăшăл ту,
тук-тук-тук!
Ай-ну, тата хавасрах,
вылятăр пуртăра,
пăта çапăр хытăрах,
часрах лартăр клуба.
Кăшăл-кăшăл ту,
тук-тук-тук!

## Урамра.

Пит те лайăх урамра
çемçе юрпа выляма,
таса, уçă сывлăшра
кула-кула шавлама.
Айтăр, çамрăк тантăшсем,
тăвайккине якатар,
хавасланса, юрласа,
вĕçе-вĕçĕн ярăнар.

# Хӗллехи тумтир.

Ҫанталӑк ытла та сивӗ. Тула тухсанах сӑмсана ҫатӑр чӗпӗтсе илет.

Пирӗн атте вӑрмана кайма хатӗрленет.



Ӑшӑ кӗрӗк тӑхӑнчӗ. Кӗрӗк ҫинчен аҫам тӑхӑнчӗ, хӗрлӗ пиҫиххипе туртса ҫыхрӗ. Пуҫне ҫӗлӗк тӑхӑнчӗ, аллине алса тӑхӑнчӗ. Ытти колхозниксемпе пӗрле вӑрмана тухса кайрӗ.

Эпир те аппапа шкула кайма хатӗрлентӗмӗр.

Аппа ҫӑматӑ, кӗрӗк тӑхӑнчӗ. Пуҫне хулӑм тутӑр ҫыхрӗ. Эпӗ кӗрӗк тӑхӑнтӑм. Пуҫа ҫӗлӗк тӑхӑнтӑм, мӑя шарф ҫыхрӑм. Алшиш тӑхӑнса ятӑм. Халь ӗнтӗ шӑнмастпӑр, шкула аванах ҫитетпӗр.

**Тупмалли юмах:** Турчка пек кукӑр, ҫӳпҫе пек хӑвӑл.



## Юртан кӗлетке туни.

Хӗл пулса ҫитрӗ. Йӗри-тавра юр сарӑлса выртать. Ҫанталӑк сивех мар.

Ҫемҫе юрпа выляма питех те аван. Ачасем, урама тухса, пӗр-пӗрне юрпа персе выляма пуҫларӗҫ.

Акӑ Ваҫҫа юрпа пеме пӑрахрӗ те:

— Айтӑр, юртан ҫын кӗлетки тӑвар!— терӗ.

Ваҫҫапа пурте килӗшрӗҫ. Юра йӑваласа купалама тытӑнчӗҫ. Ачасен аллисем шӑнаҫҫӗ, анчах ҫын кӗлетки пулса пыни вӗсене хавхалантарать.

Пысӑк ҫын кӗлетки туса хучӗҫ. Кӗлеткен пуҫӗ те пур, аллисем те пур. Куҫӗсене кӑмрӑкран турӗҫ.

## Ӑшӑтман кӗрӗк.

Кил хушшинче юртан тунӑ ҫын кӗлетки тӑрать.

— Ку кӗлетке тумтирсӗр шӑнать пуль,—

тет Анюк.—Кĕрĕк тăхăнтарсан ăшăнмĕ-ши?—тет.

— Айтăр, сăнаса пăхар!—терĕç ачасем. Кĕлеткене кĕрĕк тăхăнтартрĕç. Хăйсем юрпа выляма тытăнчĕç. Нумайччен вылярĕç. Унтан кĕлетке çинчен аса илчĕç те ун патне чупса пычĕç. Хыпаласа пăхаççĕ—вăл çаплах сивĕ тăрать.

— Ак япала,—тет Анюк.—Ма кĕрĕк ăшăтмасть-ха ăна?—тет.

— Сана та ăшăтмасть вăл,—тет Кавруç.

— Апла пулсан, хĕлле мĕншĕн кĕрĕк тăхăнаççĕ?—тесе ыйтать Анюк.

— Ăшă тытма,—тесе ăнлантарать Кавруç.—Кĕрĕк хăй ăшă памасть, вăл çын ăшшине çеç тытса тăрать. Пирĕн юртан тунă кĕлеткен хăйĕн ăшши çук. Çавăнпа вăл, кĕрĕк тăхăнтарнă пулин те, сивĕ.

## *Мĕн вăл?*

*Вĕçет - чĕнмест,*
*выртать - чĕнмест,*
*вилсен шавлать,*
*чарăна пĕлмест.*



# Йĕлтĕрпе.

Кăвак пĕлĕт янкăр тăрă;
шуса тухрăм эп уя.
Вĕçрĕ йĕлтĕр хир-вар тăрăх,
вылянать алри туя.

Питĕ хăвăрт уй-хир çийĕн
ыткăнатăп малалла.
Чĕлтĕр-чĕлтĕр юр пĕрчийĕ
ăмăртасшăн манпала.

Кăпăш юрлă хир шап-шурă,
вăрман çеç лере хура.
Эп юрлатăп çĕнĕ юрă,
хĕл хаваслăхне кура.

Шур пĕркенчĕклĕ хир аслă,
эх, саватпăр-çке ăна!
Мĕн чул савăнăç, хаваслăх
илсе килчĕ хĕл-хăна!

# Юр айне пулнӑ ҫын.

Тимахви вӑрмана вутӑ тиеме кайнӑ. Ҫул ҫинче вӑл ыттисенчен кая юлнӑ. Ҫав хушӑра ҫил-тӑман тухнӑ. Тимахви ҫул ҫухатнӑ.

Тимахви ҫул шырама кайнӑ. Тем чул шырасан та тупайман. Унӑн вӑйӗ пӗтсе ҫитнӗ. Вӑл юр ҫине кайса ӳкнӗ те, ӑна юр хӗвсе лартнӑ.

Лаши Тимахвие кӗтсе тӑнӑ-тӑнӑ та ялалла утнӑ.

Килтисем пӑхаҫҫӗ—лаша пур, Тимхави хӑй ҫук. Тимахвие шырама каяҫҫӗ, анчах тупаймасӑрах таврӑнаҫҫӗ.

Тепӗр ирхине пӗр сунарҫӑ кайӑка кайнӑ. Чипер пынӑ ҫӗртех унӑн йытти, ҫултан пӑрӑнарах кӗнӗ те, юра чавма тытӑннӑ. Кайӑкҫӑ йытӑ мӗн тупнине пӑхма пынӑ. Курать—йытӑ чавнӑ шӑтӑкран пӑс тухать. Кайӑкҫӑ хӑй те чавма тытӑнать. Кӑшт чавсанах юр айӗнче ҫын выртнине курать. Вара вӑл шӑтӑка каллех юрпа витсе хурать те яла васкаса чупать.

Ялта халӑх пухӑнчӗ, ҫынсем сунарҫӑ кӑтартнӑ вырӑна кайрӗҫ. Унта Тимахвие юр айӗнчен чавса кӑларчӗҫ те килне илсе пычӗҫ. Анчах ӑна тӳрех пӳрте илсе кӗмерӗҫ. Малтан ӑна тулта нумайччен юрпа йӑваларӗҫ. Пӗр-ик сехетрен Тимахвие ӑн кӗчӗ те, вӑл ҫимелли ыйтрӗ.

## Колхозниксен хӗллехи ӗҫӗсем.

Колхозниксем тырпула хиртен пуҫтарса кӗнӗ. Ăна ҫапса, сăвăрса кӗлете хунă. Халь вӗсем ҫав тырра армансенче авăртаҫҫӗ. Йӗтӗн, кантăр вăрринчен ҫу кăлараҫҫӗ.

Хӗрарăмсем сӳс, ҫăм арлаҫҫӗ, чăлха, алшиш ҫыхаҫҫӗ.

Выльăхсен хӗлле хире тухмалли ҫук, вӗсене килтех ҫитерсе усраҫҫӗ.

Юр ӳксенех, колхозниксенчен чылайăшӗ вăрман касма кайрӗҫ. Ман пичче автомобиль заводне ӗҫлеме кайрӗ.

Хăшпӗр бригадăра ут таврашӗсем, ҫунаурапа хатӗрӗсем юсаҫҫӗ, ҫӗнӗрен туса хатӗрлеҫҫӗ. Тимӗрҫӗсемпе плотниксем ҫитес ҫура ӗҫлеме кирлӗ ялхуҫалăх машинӗсене юсаса йӗркелесе хураҫҫӗ. Хут сахал пӗлекен колхозниксем каҫсерен вӗренме ҫӳреҫҫӗ.

## Хӗллехи каҫ.

Хӗвеланăҫ хӗрелет,
вăш-вăш сивӗ ҫил вӗрет,
кăпка юра вӗҫтерет,
ҫула тăрăх юхтарать.

Ҫул хӗрринчи лакăмсем
питӗрӗнчӗҫ юрпала.
Вăрмансенчи кайăксем
кӗрсе ларчӗҫ йăвана.

Кĕске хӳре мулкачă
сирпĕнтерчĕ çырмана.
Ытла сивĕ тивесрен
кĕрт хушшине пытанма.

Кушак пуçлă тăмана,
ыйăхĕнчен вăранса,
лапăстатрĕ ялалла
чăх-чĕп тавраш шырама.

## Икĕ колхозник.

Антунпа Якур колхозра тăраççĕ. Антун питĕ ĕçчен, ĕçе яланах вăхăтра тухать. Хушнă ĕçе тĕплĕн тăвать. Яланах тăрăшса ĕçлет. Вăл—ударник.

Якур ӳркенсе ĕçлет. Ĕçе пуринчен кайран тухать. Хăш кун пĕрре те тухмасть.

Кĕркунне çитрĕ. Колхозниксем кам мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине пăхма пуçларĕç.

Якурăн ĕç кĕнеки çине ĕçкунĕ сахал çырнă.

— Мĕншĕн капла?—тет Якур çиленсе.

— Эсĕ ĕç вăхăтĕнче мĕн турăн? Миçе кун çывăрса ирттертĕн?—тесе ыйтрĕ Антун.

— Сан ĕç çук унта.

— Пăх-ха, сан кĕнекӳ çине мĕн çырнă.

Якур вуласа пăхрĕ: **Кам ытларах ĕçлет, çав ытларах илет. Мĕн чухлĕ ĕçлен, çавăн чухлĕ илен.**

## Владимир Ильич Ленин.

Стена çинче Ленин сăнĕ çакăнса тăрать. Ваççа ашшĕне калать:

— Атте, мана ун çинчен каласа пар-ха,— тет.

— Эсĕ пĕлетĕн-и, кам вăл?—тет ашшĕ.



— Пĕлетĕп, вăл—Ленин,—тет Ваççа.

— Çапла, вăл Владимир Ильич Ленин. Пирĕн юратнă, пирĕн тăван аслă çулпуçăмăр.

— Итле. Ĕлĕк рабочисене пурăнма питĕ йывăрччĕ. Рабочисем иртен пуçласа каçченех ĕçлетчĕç. Укçи çавах тăранма çитместчĕ.

Завод хуҫи нимӗн те ӗҫлеместчӗ. Хӑй питӗ пуян пурӑнатчӗ. Вӑл рабочисем ӗҫленипе пуйса пынӑ. Рабочисене нумай ӗҫлеттеретчӗ, укҫине сахал паратчӗ. Рабочисене ҫаратса пурӑнатчӗ.

Ӗлӗк пире те, хресченсене, пурӑнма питӗ хӗсӗк пулнӑ. Пирӗн ҫӗр сахал пулнӑ.

Лайӑх ҫӗрсем кулаксен, помещиксен аллинче пулнӑ.

Помещиксемпе капиталистсем пӗр канашлӑ пурӑннӑ. Вӗсемпе тата патша пӗр канашлӑ пулнӑ. Патша вӑл чи пуян помещик пулнӑ. Патша пурне те хӑй аллинче тытса тӑнӑ. Вӑл помещиксемпе капиталистсене пуйма пулӑшнӑ. Рабочисемпе хресченсене пусмӑрта тытса тӑнӑ.

---

Ленин—рабочисен тусӗ, ҫывӑх юлташӗ пулнӑ. Вӑл ӗҫхалӑхне патша йӗркине ҫӗмӗрме чӗннӗ. Кам ӗҫлет, ун пурнӑҫӗ лайӑх пултӑр, тенӗ Ленин. Вӑл рабочи ӗҫӗшӗн кӗрешнӗ.

Ленин рабочисемшӗн тӑрӑшакансене пӗрлештерсе пынӑ. Ун пеккисем нумайлансах пынӑ. Рабочисен партийӗ—коммунистсен партийӗ—ӳссе, ҫирӗпленсе пынӑ. Кӗрешмесӗр, ҫапӑҫмасӑр нимӗн те тӑваяс ҫуккине парти лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Кӑна пӗтӗм тӗнчери рабочисем те ӑнланма пуҫланӑ.

Рабочисем Ленина юратнӑ. Помещиксемпе капиталистсем Ленина курайман. Патша жандармӗсем Ленина тӗрмене те хупнӑ.

Аякри Çĕпĕре ссылкăна янă. Ăна ĕмĕрлĕхех тĕрмене хупасшăн пулнă. Анчах Ленин урăх çĕршыва тарнă. Унтан вăл рабочисене мĕн тумаллине çырса вĕрентсе тăнă. Вара унтан таврăннă та пĕтĕм кĕрешĕве ертсе пынă.

---

1917-мĕш çулта рабочисемпе хресченсем пĕрле тăрса патшана, помещиксене, капиталистсене хăваласа янă. Фабрикăсемпе заводсене, çĕре туртса илнĕ. Пирĕн çĕршывра Совет влаçĕ туса хунă. Çакăнтан вара рабочисемпе хресченсем советсем урлă хăйсен ĕçне хăйсем туса пыма пуçланă.

Ку рабочисемпе хресченсемшĕн çĕнĕ ĕç пулнă. Вĕсене Ленинпа унăн партийĕ ертсе пынă, çĕнĕ пурăнăç тума пулăшса пынă.

Ленин питĕ нумай ĕçленĕ. Йывăр ĕçпе унăн сывлăхĕ начарлансах пынă. 1924-мĕш çулта Ленин вилнĕ.

---

Питĕ хытă кулянтăмăр эпир, Ваççа, Ленин вилнĕшĕн. Вăл каланисене эпир нихăçан та манас çук. Эпир пур ĕçе те Ленин хушса хăварнă пек туса пыратпăр. Çĕнĕ пурăнăç тăватпăр.

Шкулта сана Ленин çинчен тата тĕплĕрех каласа парĕç. Эпĕ те ун çинчен пĕрре анчах мар каласа парăп сана, каламаллисем тата нумай,—терĕ Ваççана ашшĕ юлашкинчен.




# 1924 çулти январĕн 21-мĕшĕ.

Владимир Ильич Ленин 1924 çулти январĕн 21-мĕш кунĕнче Мускав çывăхĕнчи Горки ятлă ялта вилнĕ.

Ленина Мускавра пытарнă. Вăл кун ĕççыннисем Ленина юлашки хут ăсатма пуçтараннă.

Ленин тупăкне мавзолея антарнă чухне пур фабрикăсемпе заводсем хурлăхлăн кăшкăрнă. Çул çинче пыракан трамвайсем, поездсем, çурран пыракансем 5 минута хушши чарăнса тăнă. Пур çĕрте те электричествăна сÿнтернĕ.

Пилĕк минута хушши пĕтĕм çĕршыв шăп пулнă. Мĕнпур ĕççынни аслă çулпуçне асăнса чĕререн хурланнă.

*Ленин вилне. Унăн ĕçĕ чĕрĕ. Вăл вĕрентсе хăварнисене эпир манмастпăр.*

## Иосиф Виссарионович Сталин.

Кам пĕлмест Сталин юлташа? Ăна пурте пĕлеççĕ. Рабочисемпе работницăсем те, колхозниксемпе колхозницăсем те, ваттисемпе çамрăккисем те, вырăссемпе вырăсмаррисем те — пурте ăна чунтан юратса, тăван тесе хисеплеççĕ.

И. В. Сталин — рабочи ывăлĕ, грузин. Вăл Кавказра, Грузире, çуралса ӳснĕ. Ачаранах вăл пур халăхсен рабочийĕсемпе хресченĕсене те патша, помещиксем тата капиталистсем пусмăрласа пурăннине нумай курнă. Çамрăклах вăл вĕсем тунă йĕркесене хирĕç кĕрешме тытăннă. Вăл Ленинпа пĕрле тата унăн юлташĕсемпе, рабочисемпе пĕрле кĕрешнĕ.

Иосиф Виссарионович Джугашвилие — Сталинăн хушамачĕ çапла пулнă — патша правительстви тем пекех курайман, полици ун хыççăн пĕрмаях йĕрлесе çӳренĕ.



Сталин çамрăк чухне.

Çавăн пирки Сталинăн темиçе тĕрлĕ ятпа та пурăнма тивнĕ. Юлташсем ăна е „Девид“, е „Коба“, е тата урăх ятпа та чĕннĕ.

Патша вăхăтĕнче Сталин юлташа темиçе хутчен те тĕрмене хупа-хупа лартнă, инçетри çĕршывсене ссылкăна янă. Анчах Сталин кашнинчех тарма тăрăшнă. Тарса таварăннă хыççăнах вăл каллех революци ĕçне ĕçлеме тытăннă. Сталин юлташ çамрăклах хастар та паттăр революционер пулнă.

---

Сталин Ленинăн чи çывăх юлташĕсенчен пĕри пулнă. Революциччenех Сталин

Ленинпа уйăрăлми çыхăннă, революци хыççăн вĕсем пĕр-пĕринпе тата та тачăрах тăрса ĕçленĕ.



1917 çулта рабочисемпе хресченсем, улпутсемпе капиталистсене хăваласа ярса, Совет влаçĕ туса хучĕç. Анчах ĕçхалăхĕн тăшманĕсем ирĕклĕнех парăнасшăн пулмарĕç. Вĕсем пĕтĕм тĕнчери буржуази пулăшнипе çĕнĕ власть çине вăрçăпа килчĕç. Темиçе çул хушши çапăçмалла пулчĕ çавăн чухне тискер буржуазипе. Ленинпа Сталин тĕрĕс ертсе пынипе, Совет влаçĕ вăл вăрçăран çĕнтерсе тухрĕ.

---

Ленин вилнĕ хыççăн коммунистсен партине Сталин пит çирĕппĕн, тĕрĕс ертсе пырать. Аслă çулпуçĕ, çывăх юлташ — Сталин ертсе пынипе юлашки çулсенче Совет Союзне малта пыракан çĕршыв тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Совет Союзĕнчи ĕçхалăхне пуян та культурăллă пурăнмалла тăвас тĕлĕшпе паллă çитĕнӳсем тунă. Эпир халĕ, ĕмĕтре мар, чăннипех те социализмлă пурăнăçпа пурăнатпăр.

Эпир кивĕ фабрикăсемпе заводсене юсаса çĕнетрĕмĕр. Ĕлĕкхисенчен темиçе хут

пысăк çĕнĕ заводсем темĕн чухлех туса лартрăмăр. Вĕсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Ĕлĕк чухăн, выçăпа пĕрех пурăннă хресченсем халĕ колхозсенче пуян пурăнăçпа пурăнаççĕ. Ачасемшĕн те халĕ пурăнăç ĕлĕкхинчен темиçе хут лайăх. Пур çĕрте те яслисем, ача сачĕсем, ача çурчĕсем пур. Ачасем пурте вĕренеççĕ. Ĕлĕк вĕренмесĕр юлнă çитĕннĕ çынсем те халь хăйсен хутпĕлменлĕхне пĕтереççĕ. Ялсенче радио, кино, театрсем, клубсем, библиотекăсем пур. Кашни халăх хăйĕн чĕлхипе ирĕклĕн калаçать, кашни халăх хăйĕн чĕлхипе кĕнекесем, хаçатсем, журналсем кăларать.

Хамăр çитĕнӳсене эпир социализмлă пурăнăçăн тĕп законĕ çине — çĕнĕ Сталинла Конституци çине çырса хутăмăр. Çак Конституцие тăвас ĕçе Сталин юлташ ертсе пычĕ.

1941-мĕш çулти июнĕн 22-мĕш кунĕнче пирĕн телейлĕ пурăнăçпа пурăнакан çĕршыв çине нимĕç фашисчĕсем тапăнчĕç. Вĕсем пирĕн çĕршыври пуянлăхсене хапсăнчĕç. Вĕсем пирĕн ирĕклĕ халăхсене чуралантарасшăн пулчĕç. Пирĕн çулпуç Сталин юлташ чĕннипе, ирĕклĕхе юратакан совет халăхĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешме пĕр çын пек пулса çĕкленчĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем, Сталин юлташ ертсе пынипе, Гитлерăн вăрă-хурахла çарне çĕмĕрсе тата пĕтерсе пыраççĕ.

## Тăван çĕршыв сыхлавçи.

„Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар, анчах хамăр çĕре те, хамăрăн пĕр вершук çĕре те никама та парас çук“, — тенĕ Сталин юлташ.



— Парас çук, — терĕç рабочисем.

— Парас çук, — терĕç колхозниксем.

— Парас çук, — терĕ мĕнпур ĕçхалăхĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар пуçĕнче ССР Союзĕн Оборона халăх комиссарĕ Сталин юлташ тăрать. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, пирĕн Хĕрлĕ Çар никам çĕнтерейми вăйлă çар пулса тăчĕ.

Куна пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тапăннă ирсĕр фашистсем лайăхах чухласа илчĕç. Хĕрлĕ Çар урнă тăшмана ăнăçлăн çапса çĕмĕрсе пырать.

## Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Октябрь революцийĕ хыççăн ĕçхалăх тăшманĕсем, тĕнчери буржуази пулăшнипе, Совет влаçне пĕтерме тăрăшрĕç. Пирĕн çине ют çарсем ярса тăчĕç. Патша генералĕсем, тĕрлĕ тăшмансем рабочисемпе

хресченсене каллех хăйсен чурисем туса хурасшăн пулчĕç.

Пирĕн çамрăк çĕршыв çине ун чухне ют çĕршыв çарĕсем темиçе хутчен тапăнчĕç. Анчах пирĕн Хĕрлĕ Çар тĕнчери буржуази çарĕсене çапса çĕмĕрчĕ. Вăл çарсен юлашкисене пирĕн çĕршывран хăваласа кăларчĕ.



Совет Союзĕн маршалĕ К. Е. Ворошилов

Унтанпа пирĕн Хĕрлĕ Çар тата нумай вăйлăланчĕ. Халĕ вăл пирĕн çĕршыва сĕмсĕрленсе тапăннă нимĕç фашисчĕн çарĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешет. Пирĕн Хĕрлĕ Çар хĕссе пынипе фашистсен çарĕсем Хĕвеланăçнелле чаксах пыраççĕ. Нумай вăхăт иртмĕ, тăшмана Хĕрлĕ Çар тĕппипех çапса çĕмĕрĕ. Пирĕн çĕршыва ирсĕр фашистсенчен пĕтĕмĕшпех тасатĕ.

Çирĕп пирĕн Хĕрлĕ Çар.

Хамăр çĕршыва сыхлама пур ĕçхалăхĕ те хатĕр.

Пурте пĕр çын пек пулса, хамăр çĕршывăн сыхлăх тĕрекне вăйлатар!

# Ворошилов патне янӑ ҫыру.

Ҫыру ҫыртӑм эпӗ
Ворошилова:
Юлташ Ворошилов,
Халӑх комиссарӗ!

Пысӑк телей килчӗ.
пирӗн ҫемьене,
Хӗрлӗ Ҫара илчӗҫ
манӑн пиччене.

Юлташ Ворошилов,
эп ӑна савап:
пичче ҫирӗп сыхлӗ
тӑван ҫӗршыва.

Ман тӑван пиччемҫӗм
ҫар ретне тӑрсан,
юлташ Ворошилов
савнӑҫ пулӗ сан.

Эс пеме хушсассӑн
тӑшмансем ҫине,
ун чух хӑвах курӑн
вӑл тӗл пенине.

Юлташ Ворошилов,
ман пичче вилсен,
эс мана пит хӑвӑрт
пӗлтер ун ҫинчен.

Юлташ Ворошилов,
эп час ҫитӗнеп:
пичче пекех сыхлӑп
Совет ҫӗршывне.

# Вуникĕ паттăр.

Голованов лейтенант пуç пулса тăракан вунпĕр боец çине тул çутăлас умĕн нимĕçсен роти пырса тапăннă. Нимĕçсем сахалтан та 120 çын пулнă. Вĕсем хăйсем çухатнă вырăна каялла туртса илме шутланă. Совет боецĕсем сахаллăн пулнине кура, нимĕçсем сĕмсĕрленсех малалла кĕрсе пынă. Голованов лейтенант боецсене çирĕппĕн тăма чĕннĕ.

— Юлташсем! Эпир питех те сахаллăн. Тăшман вăйĕ, хăварах куратăр, пирĕннинчен темиçе хут ытларах. Çапах та пирĕн темĕн пулсан та чакмалла мар, е пурте пĕрлех пĕр çын юлмиччен вилĕпĕр, — тенĕ вăл.

— Вилĕпĕр, анчах чакмастпăр, — тенĕ боецсем пурте пĕр сасăпа.

Фашистсен салтакĕсем çывăхарсах пынă. Пирĕн боецсемпе вĕсем хушшинче 150 метртан ытла мар тăрса юлнă. Çак самантра лейтенант „Огонь!" тесе команда панă. Фашистсене сасартăк совет боецĕсем перекен вăйлă вут-хĕм пырса çапнă. Тăшман тӳссе тăрайман, каялла çаврăнса тарнă. Çапăçу пĕтсен, Голованов боецĕсем нимĕçсен 28 виле выртса юлнине шутласа кăларнă тата нумай хĕçпăшал пуçтарса илнĕ. Пирĕн боецсем хăйсене панă приказа чыслăн пурнăçа кӳртнĕ.

## Крещановский лейтенантăн паттăр экипажĕ.

Çĕрле пулса килнĕ, анчах çапăçу хĕрсе пынă. Пĕр яла пытанса ларнă тăшман урнă пек хирĕç тăнă. Вăл тупăсенчен, миномётсемпе пулемётсенчен питĕ вăйлăн персе тăнă.

Лейтенант-орденоносец Крещановский, танкпа яла çĕмĕрсе кĕрсе, тăшманăн тупписемпе пулемĕчĕсене пĕтерсе тăкма хăюллă шухăш тытнă. Механик-водитель Карпов хăйĕн командирĕн шухăшне пĕр самантрах ăнланса илнĕ. Вăл шалти люка кăшт уçнă та мĕнпур хăвăртлăхпа çула тухса кайнă. Нимĕçсем пур енчен те тупăсемпе пулемётсенчен питĕ вăйлăн пеме пуçланă.

Паттăр водитель, хаяррăн кăшкăрса, хăйĕн танкне тӳрех нимĕçсен туппи патне илсе пынă. Йывăр танк пырса таптанипе тупă тимĕр купи пулса юлнă. Унтан Карпов нимĕçсен танксене хирĕç пемелли иккĕмĕш туппи çине пырса кĕнĕ. Ăна лутăркаса хăварнă та малалла вĕçтерсе кайнă. Ял варринче нимĕçсен снаряд склачĕ пулнă. Карпов танкĕ мĕнпур хăвăртлăхпа склад патнелле кĕрлеттерсе пынă. Склад çине снаряд хыççăн снаряд тăкнă. Тăшманăн склачĕ сывлăшалла сирпĕннĕ.

Карпов танка тăшмансен тепĕр туппи патнелле çавăрнă. Çав вăхăтра нимĕçсен

снарячĕ уçă люка пырса тивнĕ те танка сиенленĕ. Пысăк хăвăртлăхпа пыракан танк çунакан çурт çине пырса кĕнĕ. Стенасене шăтарса тухнă хыççăн танк чĕтренсе илнĕ те чарăнса ларнă. Танкăн моторĕ ĕçлеме чарăннă. Танк çине çунакан пĕренесем ишĕле-ишĕле аннă.

Танк та, унăн экипажĕ те пĕтессĕн туйăннă. Анчах та паттăр танкистсем çухалса кайман. Командир Крещановский темиçе секунда хушшинче танка тӳрлетнĕ те вутран илсе тухнă.

Крещановский юлташ танкĕн экипажĕ хăюллă ĕçсем тунине пула, тул çутăлличчен тăшмансене ялтан хăваласа кăларнă.

## Фесенко красноармеец фашистсен тыткăнĕнчен тарни.

Фесенко красноармееца хĕрӳ вăрçă вăхăтĕнче йывăр амантнă. Ăнне çухатнă Фесенко пĕр шыв хĕррине пырса ӳкнĕ.

Ăн пырса кĕрсен, вăл хăйне тăвата фашист хăйсем енне кимĕпе илсе кайнине чухласа илнĕ.

— „Эпĕ фашистсен тыткăнĕнче! — шухăшласа илнĕ Фесенко. Çак шухăш ăна вĕрилентерсе янă. — Тыткăнра пуличчен вилни лайăхрах, — шухăшласа илнĕ те вăл çавăнтах мĕн тумаллине йышăннă. Фесенко, шыв ĕçен пекки туса, кимĕ хĕрри çине хыт-

тăн пуснă та ўпĕнтерсе янă. Фашистсем шыва сирпĕнсе ўкнĕ. Çав хушăра Фесенко, шыв тĕпнелле чăмса, хамăр еннелле ишсе кайнă. Тăшмансем енчен Фесенко çинелле пеме тытăннă. Шыв айне пытанса, хăй çулне пĕрмай улăштара-улăштара, вăл шыв урлă каçнă та йывăç тĕмĕсем хушшине, хамăр çарсем патне, ăнăçлăнах пырса тухнă.

## Пĕр талăк иртсен.

Кĕçĕн сержант Осипов юлташ (Элĕк районĕнчи Пиçенер ялĕ) пилĕк боецпа пĕрле командованин заданине пурăнăçа кĕртнĕ чухне тăшмансен тылне лекнĕ. Кусем ĕнтĕ тыткăна лекрĕç пулĕ, тесе шутланă чаçри юлташĕсем.

Вăхăт çур талăк иртнĕ, Осипов юлташ çук. Пĕр талăк çитнĕ. Шăп пĕр талăк иртнĕ хыççăн кĕçĕн сержант Осипов юлташ, хăйĕн пилĕк боецĕпе пĕрле, фронт линийĕ урлă каçса, хамăр чаçе таврăннă. Пирĕн маттур боецсем хăйсемпе пĕрле икĕ пулемĕт тата тăватă фашиста тытса килнĕ.

Хăюллă боецсене командовани тавтунă. Вĕсем çинчен пĕтĕм чаçре мухтавлă хыпар сарăлнă.

## Чапаев.

Василий Иванович Чапаев пирĕншĕн ĕмĕр манми çын. Вăл граждан вăрçин геройĕ.

1919-мĕш çулта пирĕн çамрăк çĕршыв çине 14 государство çарĕ тапăнчĕ. Буржуази, пирĕн çĕршывра Совет влаçне пĕтерсе, Российăра каллех хăйĕн влаçне туса хурасшăн пулчĕ. Власть пуçĕнче вĕсен шучĕпе вырăс генералĕ Колчак тăмалла пулнă.



Колчак, ют çĕршывсенчи буржуази пулăшнипе, пысăк çар пухса пирĕн çине тапăнчĕ. Колчака хирĕç, Фрунзе ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар хастарлăн çапăçрĕ. Вăл Колчакăн çарĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Çак ĕçре Чапаев командир питĕ паллă вырăн йышăнса тăчĕ. Чапаев дивизинчен шурă çарсем вутран хăрана пек хăранă. Колчак Чапаева хирĕç темиçе хутчен те темĕн пысăкăш çарсем ярса тăнă. Анчах Чапаев вĕсене яланах çĕмĕрсе пынă.

Чапаев Совет влаçĕшĕн çапăçса хăйĕн пуçне хунă. Пĕррехинче ăна шурă çарсем тавраллах çавăрса илнĕ. Вара Чапаевăн Урал шывĕ урлă каçса каймалла пулнă. Шыв урлă ишсе каçнă чухне вăл, суранланнăскер, вăй пĕтсе çитнипе шыва путнă.

# Пирĕн чикĕсем хĕрринче пурăнакан пионерсем.

Пионерка Валя Витушко тата унăн юлташĕсем вăрманта пĕр палламан хĕрарăма тĕл пулнă.

— Эсир ăçта каятăр?—тесе ыйтнă Валя.

Палламан хĕрарăм чылайччен чĕнмесĕр тăнă та сасартăк персе янă:

— Турра шырама каятăп, ачасем.

Пионерсем кулса янă. Валя вĕсене пуçне сулса паллă панă та, пурте „турра шыракан“ хĕрарăма йĕри-тавра çавăрса илнĕ.

— Ăçтисем эсĕ?—тĕпченĕ Валя.

— Кайăр ман патăмран!—кăшкăрса янă хĕрарăм, унтан вăл тарма пуçланă.

Пионерсем ун хыççăн чупнă. Нумайăшĕ часах хĕрарăма хăвалама пăрахнă. Тата каярахпа хĕрарăм хыççăн пĕр Валя кăна чупнă. Таракан хĕрарăма Валя пĕр самантлăха та куçран вĕçертмен.

Чикĕри заставăра тревога панă. Пограничниксем юланутпа Валяна пулăшма васкаççĕ. Вĕсене Ира Витушко пĕлтернĕ.

Чикĕ урлă вăрттăн каçнă хĕрарăма чикĕ тĕлĕнче вăл каялла каçса кайиччен тытса ĕлкĕрнĕ. Валя, ун умне тухса, ун çулне пӳлнĕ. Хĕрарăм ăçталла тарасси çинчен шухăшласа тăнă вăхăтра пограничниксем çитсе те ĕлкĕрнĕ. „Турра шыракан“ хĕрарăм шпионка пулнă.

Пирĕн чикĕсем хĕрринче пурăнакан пионерсем питĕ лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем питĕ паха йĕрлевçĕсем. Тĕрлĕ сас-чĕвĕ, турат çатăртатни тăрăх, йĕр тăрăх вĕсем вăрманта кам çӳренине тĕплĕ пĕлеççĕ. Вĕсем хăравçăсем мар. Вĕсем Совет çĕршывĕн чиккисене сыхлас ĕçре хăйсен пурăнăçне те шеллемеççĕ.

**Ыйтусем:**

Пионерсем вăрманта кама тĕл пулнă?
„Турра шыракан" хĕрарăм чăннипе кам пулнă?

## Тăшман тыткăнĕнче.

Ирхине ирех пĕр пионер вăрмана çырла татма тухса кайнă. Вăл çырла татса тавăрăннă çĕре вĕсен ялне фашистсем тытса илнĕ.

Пионер вăрмана тарма шут тытнă, анчах тарса ĕлкĕреймен. Ăна тискер фашистсем тыткăна илнĕ. Выçăхнă тискер кайăксем пек вĕсем çырлана çиме тытăннă. Офицерсем çырла çинĕ хушăра нимĕç салтакĕсем ачана вĕлерес пек хĕненĕ.

Унтан офицерĕ аллине çĕкленĕ те, салтаксем пионера хĕнеме чарăннă. Офицер, çĕрте йывăррăн сывласа выртакан пионер патне пырса, ăна урипе тĕксе илнĕ:

— Пирĕн разведчик пул, вара сана вĕлермĕпĕр,—тенĕ.

Ача пĕр чĕнмесĕр курăк çинче выртнă.

Унӑн пуҫӗнче пӗр шухӑш анчах пулнӑ: „Эпӗ, пионер, нихӑҫан та фашистсен разведчикӗ пулас ҫук! Нихӑҫан та!“ Унӑн офицера питӗнчен сурас килнӗ, анчах вӑл, хӑйне хӑй чарса, чееленме шутланӑ.

— Эпӗ кунта кашни сукмака пӗлетӗп,— тенӗ пионер.

Фашистсем ӑна шыв урлӑ каҫса Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсен туппнсем, пулемӗчӗсем ӑҫта тӑнине пӗлсе килме хушнӑ. Пионер хӑйне Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем патне янӑшӑн питӗ хӗпӗртенӗ, анчах хӑй хавасне палӑртман. Вӑл фашистсен ҫарӗ мӗнле вырӑнаҫса тӑнине, танксем, миномётсем миҫине шутласа пӗлнӗ. Унтан вара шыв хӗрринелле тухса кайнӑ.

Пионер мӗнле кайнине, мӗн тунине офицер асӑрхасах тӑнӑ. Офицер ун вӑрттӑн шухӑшне ан систӗр тесе, пионер тӑрӑшсах хырӑмпа шуса пынӑ. Шыв урлӑ ишсе каҫсан, вӑл каялла ҫавӑрӑнса пӑхнӑ. Офицер ун ҫине пӑхсах тӑнине курсан, пионер каллех йывӑҫ тӗмӗсем хушшипе, варсем тӑрӑх шуса кайнӑ.

Ҫур сехетрен паттӑр пионер, Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем патне ҫитсе, командира нимӗҫ ҫарӗсем ҫинчен тӗплӗн каласа кӑтартнӑ.

— Шыв хӗрринче, ҫӗмӗрнӗ кӗпер тӗлӗнче, фашистсем 7 танк, 12 миномёт курӑнмалла мар туса лартнӑ,—тенӗ вӑл.

Командир маттур пионера тав тунӑ. Пирӗн тупӑсенчен тӑшман ҫинелле пеме пуҫланӑ.

Гитлер салтакӗсем ача вӗсене кирлӗ хыпарсем илсе тавӑрӑнассине кӗтнӗ, ун вырӑнне вӗсем тӑхлан кучченеҫсем кӗтсе илнӗ те пурте пекех пӗтнӗ.

## Тӑшмана тытни.

Колхоз хирӗсем тӑрӑх автомобиль вӗҫтерсе пынӑ. Вӑл аслӑ ҫул ҫинчен час-часах вак-тӗвек ҫулсем ҫине пӑрӑнса кӗнӗ, тӑрсан-тӑрсан каллех аслӑ ҫул ҫине тухнӑ. Ҫырма



урлӑ хывнӑ вӑрӑм кӗпер тӗлне ҫитсен, вӑл чарӑнса тӑнӑ. Уҫӑ кантӑк витӗр пӗр ҫын кӗпере питӗ тимлӗн тӗпчесе пӑхнӑ. Унтан автомобиль кӗпер ҫине пырса кӗнӗ. Автомобиль кӗпер урлӑ каҫса ҫитнӗ чухне: „Стой!“—тенӗ сасӑ илтӗннӗ.

Çул çине çывăх ялти колхозниксен ачисем улттăн чупса тухнă. Аслăраххи—Витя Фомин—винтовка затворне шаклаттарса илнĕ, колхоз конюхĕн ывăлĕ Сима Пронин аллине пуртă тытнă, учитель ывăлĕ Витя Соловьев пысăк чул тытнă.

Кабина алăкне уçса, Витя машина ăшĕнчи çынтан документсем ыйтнă.

Машина ăшĕнче ларакан çын, питне чалăштарса илнĕ те:

— Эсир мĕнлескерсем вара?—тесе ыйтнă.

— Эпир,—тенĕ Сима,—колхоз ачисем, дежурнăйсем. Машинăсене çул кăтартса яратпăр.

— Пăхăр кунта,—тенĕ машина ăшĕнчи çын, хăйĕн кăкри çине кăтартса.

Унăн кăкри çинче, сулахай енче, Хĕрлĕ Ялав орденĕсем, икĕ орден йăлкăшса тăнă. Ачасем çавна курсан пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ. Вĕсем ку çын кăкри çинчи орденсем Хĕрлĕ Çар командирĕн орденĕсенчен урăхларах пулнине асăрханă.

— Документсем ăçта?—çинерех тăрса ыйтнă Витя.

— Эпĕ вĕсене хам чаçре хăвартăм,—тенĕ палламан çын.

— Сирĕн инçе каймалла-и?—ыйтнă хайхи çынтан Витя Соловьев.

О. хулине,—ответ панă лешĕ.

— Айтăр эппин, сире çул çине кăларса

ярăпăр, — тенĕ ачасем. Виçĕ ача машина ăшне кĕрсе ларнă. Вĕсем машинăна колхоз правленийĕ патне тухакан çулпа илсе кайма хушнă. Правлени тĕлне çитсен, Витя правлени умĕнче тăракан милиционера кăшкăрса чĕнсе илнĕ.

— Акă палламан çынна илсе килтĕмĕр, унăн докуменчĕсем çук,—тенĕ вăл милиционера.

Милиционер палламан çынна тытса чарнă. Вăл çын нимĕç самолĕчĕ çинчен аннă фашист пулнă. Орденĕсем унăн суяскерсем пулнă.



## Чкалова асăнса.

Хумханчĕ, хускалчĕ халăх,
хурлăх кашнин чĕринче:
пиртен уйăрлать Чкалов
декабрĕн хĕл сиввинче.

Мĕн-ши паян эп калăп?
Шелленипе манăн ăш çунать.
Çук пирĕнпе тек Чкалов—
вĕçевçĕ, герой, депутат.

Сан пек пулмашкăн, Чкалов,
тупа тăватпăр паян.
Манмĕ сана пирĕн халăх,
асăнĕ ĕмĕр, ялан.

Манмĕ сана пирĕн халăх,—
сӳнмеççĕ хĕвеллĕ ятсем.
Малалла эпир утăпăр, Чкалов,
Сан ятна та ялав пек йăтса.

## Самолёт çинче ураписене çӳлелле тăратса.

Пирĕн çĕршывăн чаплă лётчикĕ Владимир Коккинаки хăвăрт вĕçекен çĕнĕ самолёта тĕпчесе сăнанă. Питĕ çӳлте вĕçнĕ чух самолёт сасартăк ураписемпе çӳлелле çавăрăнса кайнă. Унтан вăл пĕтĕрĕнсе вĕçме пуçланă. Чĕнпе пушă çеç сыхăннă лётчик, çурри таран кабинăран тухса, самолёт айĕнче пуçхĕрлĕ çакăннă. Машина рульне алăран вĕçертнĕ. Чĕн пиçиххисем халь-халь татăлас пек туртăннă... Хăлхасенче калама çук хаяр çил шăхăрнă. Çĕрпе пĕлĕт тата самолёт та куç умĕнчех карусель çинчи пек çаврăнма пуçланă. Пĕр секунда йăнăшсан та пĕтме пулать.

Анчах Коккинаки хăйĕн вăйне тата пĕлĕвне шаннă. Вăл, пĕтĕм вăйне пухса, управлени ручки патне туртăннă. Пуçхĕрлĕ тăрса, вăл самолёта пĕтĕрĕнсе вĕçмешкĕн чарнă. Нумай вăхăт иртмен, хурçă кайăк аэродром çине аванах анса ларнă.

Коккинаки Совет Союзĕн Геройĕ. Мускавран Çурçĕр Америкăна ниçта анса ларmasăр геройла вĕçсе тухнăшăн Совет правительстви ăна Ленин орденĕ панă.

## Çичĕ самолёт çирĕм икке хирĕç.

Пĕр ялăн урамĕсенче хаяр çапăçу пынă. Нимĕçсем пирĕн çуран çар çине бомба пăрахакан самолётсем ярса тăнă.

Çуран çара хӳтĕлеме пирĕн çичĕ истребитель вĕçсе тухнă. Аякран тăшмансен çирĕм пилĕк самолёчĕ вĕçсе килни курăннă: çичĕ бомбардировщик тата вунсакăр истребитель. Çапла пирĕн çичĕ самолёта хирĕç тăшмансен çирĕм пилĕк самолёчĕ тухнă. Пирĕн лётчиксем вырăнĕнче нимĕçсем пулнă пулсан, вĕсем çапăçăва кĕмесĕрех пăрахса тарнă пулĕччĕç. Вĕсем пысăк ушкăнпа пынă чухне пирĕн пĕр самолёта тĕл пулсан чăрсăрланса каяççĕ, ытти чухне, хăйсен пĕр самолётне хирĕç пирĕн пĕр самолёт тĕл пулсан та, тарса пытанма тăрăшаççĕ.

Пирĕн лётчиксем, çапăçуран пăрăнма мар, хăйсем çапăçăва малтан пуçласа янă. Вĕсем



фашистсен самолёчёсем хушшине шăтарса кĕнĕ те, вĕсене пулемётсемпе тупăсенчен вăйлăн персе çĕмĕрме тытăннă. Пĕр-пĕр лётчик хăрушăлăха кĕрсе ӳкнине курсанах, ăна пулăшма юлташĕ вĕçсе пынă. Совет çар çыннисем яланах çавăн пек тăваççĕ: пĕр-пĕрне пулăшасси—вĕсемшĕн закон.

Çапăçу 15 минута хушши анчах пынă. Çав 15 минута хушшинче фашистсен çичĕ самолёчĕ çĕре персе аннă.

Пирĕн лётчиксем пурте хамăр аэродрома тĕрĕссĕнех таврăннă. Пĕр лётчикăн, Скотной юлташăн, çапăçу вăхăтĕнче самолётне вут хыпса илнĕ пулнă. Анчах вăл çунакан самолёта чип-чиперех аэродром çине антарса лартнă.



## Октябрёноксем.

Октябрёноксем коммунистла ушкăнра тăраççĕ. Октябрёноксен ушкăнĕ Ленин ятне йышăннă.

Октябрёноксем пионерсене, комсомолецсене пулăшса тăраççĕ. Вĕсем сывлăхлă, çирĕп пионер пулма тăрăшаççĕ. Вĕсем çитĕнсен коммунист пулма хатĕрленеççĕ. Вĕсем вырăс, тутар, мари, китай, испани ачисен юлташĕсем. Октябрёноксем ытти пур ĕçхалăхсен ачисене те юлташсем пулаççĕ.

Октябрёноксем вĕреннĕ çĕрте те, ĕçре те примерлă ачасем. Вĕреннĕ çĕрте те, ытти ĕçре те вĕсем пĕрне-пĕри пулăшаççĕ. Пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Кашни октябрёнок çăлтăр çакса çӳрет.

---

Октябрёноксен ушкăнĕ кам ячĕпе тăрать?
Октябрёноксем камсене пулăшаççĕ?
Октябрёноксем кам пулма хатĕрленеççĕ?

## Ачасене чĕнсе юрланă юрă.

Ачасем, сывах-и? Эп хавас!
Ха, пыл хурчĕ пек сĕрлеç вĕсем...
Ват Джамбул, кив тăмрине илсе,
килчĕ сирĕн хӳхĕм уява,
сирĕнпе хăналанас тесе.

Ватă эп, курпун тĕве пек, ачамсем,
выльăр, кулăр; кăмăллать старик сире.
Эсир, манăн савнă ывăлăмсем,
чĕчĕ ĕмекен путексемпе пĕрех.

Сирĕншĕн тĕнче хавас, хитре.
Йăлкăшса çунаççĕ тӳпере
сирĕншĕн ахах пек çăлтăрсем,
сар хĕвел савса лăпкать сире,
пурнăç сирĕн юрă пек хитре!

Сталин—çĕр çинчи чи пысăк çын—
тăванран та çывăх вăл сире;
Сталин—çут хĕвел вăл, ун ăшши
пур çĕрте те ачашлать сире.

Сталин кăмăллă пур çынсенчен,
вăл сире ĕçчен хуласенчен,
савăнăçлă пурăнччăр тесе,
ярса пачĕ капăр теттесем,
букварьсем, хитре кĕнекесем.




# Пирĕн колхоз.

Пирĕн колхоз—пысăк та пуян. Унăн халĕ сĕт-çу ферми, сысна ферми тата чăх-чĕп ферми пур. Фермăсенче выльăх-чĕрлĕх шучĕ çуллен нумайланать, вĕсем паракан тупăш та çуллен ӳссе пырать. Колхозăн электростанци, виçĕ арман, пысăк мунча, клуб пур.

Çĕре лайăх ĕçлесе тăнипе, пирĕн колхозăн тырри те, тĕрлĕ çимĕçсем те çулсеренех лайăх пулаççĕ.

Выльăх апачĕ тулăх пирки, колхозăн лашисем, тĕрлĕ выльăхĕсем мăнтăр, тутă çӳреççĕ.

Колхозниксен пурăнăçĕ çулсеренех лайăхланса пырать.

Пирĕн колхозра кашни киле икшер хаçат тивет, журналсем те нумай килеççĕ.

Килсеренех радио кӳртнӗ. Ҫамрӑксем тӗрлӗ шкулсенче, курссенче вӗренеҫҫӗ. Ваттисем хушшинче те хут пӗлменни ҫук.

Колхозӑн пӗчӗк ачасем валли ясли, пысӑкраххисем валли ача сачӗ пур. Ӗҫ ҫинче колхозниксем пӗрле апатланаҫҫӗ. Яслисем, ача сачӗсем тунипе, пирӗн аннесен ӗҫӗ ҫӑмӑлланать. Вӗсен колхозри ӗҫсене тума вӑхӑт ытларах пулать.

Колхозниксен пурлӑхӗ ӳссе пынипе, вӗсем государствӑна та пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Тырӑ, тӗрлӗ ҫимӗҫ, аш-какай сутаҫҫӗ.

*Колхозра эпир ӗҫлетпӗр*
*пӗтӗм ялӗпе.*
*Утӑмлатпӑр, ҫӗнтеретпӗр*
*Ленин-Сталин ҫулӗпе.*

## Лаша ӗҫӗ.

Лаша—питӗ усӑллӑ выльӑх. Унӑн кӗлетки илемлӗ, вӑйӗ пысӑк. Лаша пит нумай ӗҫлет. Ялхуҫалӑхӗнче лаша темӗн тӗрлӗ ӗҫсем туса тӑрать.

Хӗлле лашасем вӑрмантан тӗрлӗ йывӑҫ, вут-шанкӑ турттараҫҫӗ. Ҫуркунне лашасене плуг кӳлсе ака тӑватпӑр. Вӗсене сӳре сӗтӗрттеретпӗр.



Çуллахи шăрăх вăхăтра утă çулса пуçтаратпăр. Симĕс утă лавĕсене турттарма каллех пире лашасем кирлĕ.

Кĕр енне эпир лашасем кӳлсе кĕлте турттаратпăр. Авăн çапсан, хулана тырă сутма та лашапах каятпăр.

Çапла, лашасем нумай ĕçлеççĕ. Çавăнпа та эпир лашасене юрататпăр. Лайăх çитеретпĕр. Хĕлле ăшă витесенче усратпăр.

*Мĕн вăл?*

*Çуркунне-плугра, сӳрере, çулла урапара, хĕлле çунара.*

# Лаша мĕн ĕçлет.









Çак картинăсем çине пăхса, лаша мĕн ĕçленине каласа парăр. Колхозсенче çакăнта кăтартнă ĕçсенчен хăшне трактор, хăшне грузовик туса тăрать?

# Лашана лайăх пăх.

Ванюксем колхоза кĕриччен чухăн пурăнатчĕç. Вĕсен пĕр пĕчĕк лаша пурччĕ. Тырри сахал пирки, Ванюксен ашшĕ лашана улăм анчах çитеретчĕ. Сайра-хутра çеç утă паркалатчĕ. Ăшă вите çук пирки, Ванюксен лаши хĕлле шăнса тăратчĕ.

Çавăнпа та Ванюксен лаши вăйсăрччĕ. Çул çине кўлсе тухсан, пушăпа çапсан та чупмастчĕ. Вăрмана кайсан та, йывăр лава туртаймастчĕ.

Ванюксем колхоза кӗчӗç те, вӗсен пурӑнӑçӗ юсансах кайрӗ. Лашин те пурӑнӑçӗ юсанчӗ.

Ванюксен лаши халӗ колхозӑн ӑшӑ, çутӑ витинче тӑрать. Лашасене унта утӑ, сӗлӗ çитереççӗ, пӑтратса параççӗ. Кашни кун хырчӑкпа, щӗткӑпа тасатаççӗ. Чӗрнисене тикӗслесе тӑраççӗ. Лашасем мӑнтӑр, таса. Çутӑлса кӑна тӑраççӗ. Çул çине тухсан, пушӑ кирлӗ мар. Тилхепене хытӑрах тытсапыр кӑна.

---

**Тупмалли юмах:** Малта иккӗн чупаççӗ, **кайра** иккӗн хӑвалаççӗ, хыççӑн мелке сӗтӗрӗнет. Мӗн вӑл?

# Ӗне.

Акӑ пирӗн ӗне. Вӑл пире сӗт парать. Анне ӑна кунне виççӗ сӑвать. Кашни кун 12 литр сӗт суса илет.

Пирӗн анне сӗтрен хӑйма пуçтарать. Хӑймине уçласа, уçламçу тӑвать. Сӗтренех тата тӑпӑрч пулать. Тӑпӑрчран эпир чӑкӑт тӑватпӑр.

Ӗне сӗт нумайтарах патӑр тесе, эпир ӑна лайӑх пӑхатпӑр. Тӗрлӗрен апат çитеретпӗр. Утӑ паратпӑр. Улӑм тураса пӑтратса, çӑнӑх сапса паратпӑр. Выльӑх кӑшманӗ те, çӗрулми те, силос та паратпӑр.

Хӗлле сивӗре шӑнса тӑрсан, ӗне сӗт



сахал парать. Эпир ăна хĕлле ăшă витере усратпăр.

Пирĕн колхозра та ĕнесем нумай. Вĕсем валли пысăк ăшă вите тунă. Вĕсене ятарласа уйăрнă хĕрарăмсем пăхаççĕ. Вăхăтра çитереççĕ, вăхăтра шăвараççĕ. Час-часах колхоз витисене выльăх тухтăрĕ пырса пăхать.

Колхоз ĕнисем сĕт нумай параççĕ. Пирĕн колхоз ферминче сĕт хăймине сепараторпа уйăрса илсе, уйрăм машинăсемпе уçласа çу тăваççĕ.

---

Ĕне пире мĕн парать? Эпир ăна мĕн çитеретпĕр? Мĕншĕн хĕлле ĕнене ăшă витере усрамалла?

## Сыснасем.

Колхозăн аслă выльăх картишĕнче мăнтăр сыснасем çÿреççĕ. Нăр-к! нăр-к! туса, аран уткалаççĕ.

Хĕллехи сивĕсем сыснасене хăрушă мар. Тирĕ айĕнче вĕсен çу нумай. Çав çу вĕсене

сивӗрен сыхласа тӑрать. Вӑл ӑшӑ кӗрӗк пекех, сивве ямасть.

Пирӗн килте те сыснасем пур. Вӗсене ҫӗрулми, яшка юлашкисем, ҫӑкӑр таткисем,



ҫӑнӑх шывӗ паратпӑр. Ҫуллахи кунсенче ҫуса тасатса тӑратпӑр.

Сысна пире аш, ҫу, тир, шӑрт парать. Вӑл питӗ усӑллӑ выльӑх.

## Пӗл: мӗн вӑл?

Шӑши тытать.—Мӗн вӑл?
Сӗт парать.—Мӗн вӑл?
Ҫӑм парать.—Мӗн вӑл?
Кил сыхлать.—Мӗн вӑл?
Аш, ҫу, тир, шӑрт парать.—Мӗн вӑл?

## Автан.

Ҫатан ҫинче шур автан
ҫунат ҫапса авӑтать:
Куккуреккук! Куккуреккук!
Лисук ӑна мӑшкӑлать,



майне тăсса кăшкăрать:
Куккуреккук! Куккуреккук!
Сарайĕнче сар чăххи
сар çăмарта тăвасшăн:
Кăт-кăт-кăт-ктак! Кăт-кăт-кăт-ктак!
Автан ăна илтрĕ те
ыр кăмăллă пуласшăн:
Кăт-кăт-кăт-ктак! Кăт-кăт-кăт-ктак!
Чăххи ларчĕ йăвана,
автан уншăн савăнать.
Куккуреккук! Куккуреккук!

## Кролик.

Пирĕн колхозра кроликсем пур. Вĕсене клеткăсенче усраççĕ. Хăш чухне уçăлса çӳреме килкартине кăлараççĕ.

Кроликсем курăк çиеççĕ, утă çиеççĕ, нимрен ытла купăстапа кишĕре юратаççĕ. Çĕрулмине те çиеççĕ. Анчах вĕсене çĕрулмине çуса памалла, унсăрăн вĕсен хырăмĕнче хуртсем ĕрчесе кайма пултараççĕ.



Пирĕн колхозри кроликсем пиртен хăрамаççĕ. Эпир вĕсене апат паратпăр. Çурăмĕсенчен ачашласа та пăхатпăр. Вĕсен çăмĕ мамăк пек çемçе. Хăшĕ шурă тĕслĕ, хăшĕ хура, хăмăррисем те пур.

Кролик ашĕ питĕ тутлă.

## Кушакпа йытă.

Кушак апат çисе тăнă. Çав вăхăтра ун патне йытă çури пынă. Кушак йытă çурине хăйĕн çивĕч чĕрнисемпе сăмсаран чăрмаласа илнĕ.

Йытă çури те парăнасшăн пулман. Вăл кушака хӳринчен çыртнă. Кушак йытта хирĕç шăртланса тăнă. Вăл ăна куçĕнчен чавса илме хăтланнă. Йытти кушака ĕнсерен çыртса илесшĕн пулнă.

Çав вăхăтра Анюк инке шыв йăтса пынă. Вăл кушакпа йытă çапăçнине курнă та вĕсене чарма пикеннĕ. Лешсем чарăнман.



Вара Анюк инке тулли витрине тытнӑ та кушакпа йытӑ ҫине чашт! сапнӑ. Кушакпа йытӑ тин пӗр-пӗринчен уйӑрӑлса тарнӑ.

## Мӗн вӑл?

Кашкӑрпа пӗр тӑванскер, хуҫапала тусӑскер, ҫӗрле ыйхӑ пӗлменскер, крыльца айӗнче выртать, кил хуҫин ҫуртне сыхлать. Мӗн вӑл?

*Шӑшшиӗн кушак та тискер кайӑк*

## Ак япала!



Акă вăл, акă!



Халех тытатăп!



Куна эпĕ кĕтменччĕ!

## Кашкăр.

Вăрманта та, хирте те чĕрчунсем сивĕрен пытаннă. Шăна-пăван тахçанах пĕтнĕ. Çĕлен-калта тăпра ăшĕнче хытса выртнă. Упа хĕл каçма мăн шăтăка кĕрсе выртнă. Арлансем те хăйсен шăтăкĕсенче çывăраççĕ.

Кашкăр анчах çывăрмасть. Вăл, ниçта кайса кĕреймесĕр, унта-кунта чупкалать. Хырăмĕ выçнипе кунĕн-çĕрĕн апат çинчен шухăшлать. Çĕрле яла пырса, выльăхсене тапăнать.



Ял çыннисем кашкăртан сыхланаççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене шанчăклă çĕре ăшă витесене хупаççĕ.

## Мĕн вăл?

Кăвак тĕслĕ, çивĕч шăллă сĕм вăрманта пурăнать, пăру-путек тăврашне май килсессĕн вăл пăвать.

## Упа.

Кĕркунне упа вăрман чăтлăхне чи шала кĕрсе кайрĕ. Унта вăл пĕр чăрăш айне шăтăк чаврĕ. Шăтăк тĕпне вĕтĕ туратсем сарчĕ. Çиеле çапă витрĕ. Унтан шăтăка кĕрсе выртрĕ.

Хĕл çитрĕ. Пĕтĕм вăрмана юр витсе хучĕ. Çил-тăмансем улама тытăнчĕç. Упа шăтăкне те юр витсе лартрĕ. Анчах упа тĕлĕрее çеç выртать, шăтăкра ăна ăшă.



Ҫуркунне ҫитрӗ. Хӗвел ăшăтса пăхма пуҫларӗ. Юр ирӗлме тытăнчӗ. Упа ҫуркуннене туйса илчӗ те шăтăкран йăраланса тухрӗ. Вăрман тăрăх апат шырама утрӗ.

---

Упа ăҫта хӗл каҫать? Ҫӗлен-калта хӗлле ăҫта пытанса выртать?

### *Кам кама тытнă?*

*— Упа тытрăм!*
*— Ҫавăтса кил эппин.*
*— Пымасть вăл!*
*— Эппин ху кил.*
*— Хама та ямасть.*

# Вакша.

Юр ӳкрӗ. Эпир пиччепе вăрмана кайăк тытма кайрăмăр. Унталла-кунталла пăхкаласа, йӗр йӗрлесе пыратпăр. Акă пӗр юман патӗнче мăйăрпа йӗкел хуппи сапаланса выртать.



Пичче мана шăппăн: Ан шарла, кунта вакша йăви пур. Ав куратăн-и?— тет.

Чăнах та, турат ҫинче вакша ларать. Эпӗ пăхса та юлаймарăм,— вакша, туратран турата сиккелесе, куҫран та ҫухалчӗ. Ҫавăнтах пичче хăвăл юман шыраса тупрӗ. Вăл юман тăррине хăпарса кайрӗ те:

— Эй, мăнтарăн вакши, мӗн-мӗн кăна хатӗрлемен! Ăслă мӗн, хӗл каҫиччен выҫă аптăрас ҫук,—терӗ.

Чăнах та, хăвăл тӗпӗнче тирпейлесе хунă сап-сарă мăйăрӗ те, йӗкелӗ те, типнӗ ҫырли те пур. Пичче пӗр мăйăрне катса пăхрӗ.

Вакша мăйăрне эпӗ те тутанса пăхрăм.

---

Вакша йăвине ăҫта тăвать? Хӗлле вăл мӗн ҫисе пурăнать?

## Кайăксене ан тытăр.

Пĕрре хĕлле эпир шăллămпа икĕ кăсăя тытрăмăр. Пÿрте илсе кĕтĕмĕр. Çитерес тесе кантăр вăрри те паратпăр, çăкăр та



паратпăр. Кăсăясем сăхса та пăхмаççĕ. Чĕтресе анчах лараççĕ.

Тепĕр кунне, эпĕ шкултан таврăннă çĕре, ман шăллăм макăрса ларать.

— Мĕн пулчĕ тата?—тесе ыйтрăм.

— Кă-сă-ясем пĕ-ĕт-рĕç!—тесе, тата хытăрах уласа ячĕ шăллăм.

— Епле пĕтрĕç?—тетĕп.

— Пĕри çунакан кăмакана вĕçсе кĕрсе вилнĕ, теприне кушак тытса çинĕ,—тет шăллăм.

Кăмăла пит лайăх мар пулса кайрĕ. „Ман айăппах пĕтрĕç çке кусем",—тесе шухăшлама пуçларăм. Вĕçен кайăксем пире мĕн чухлĕ усă пани çинчен шкулта вĕрентнисем аса килчĕç. „Ÿлĕм нихăçан та усăллă кайăксене çапла тытса пĕтерессĕм çук",—тесе хама хам сăмах патăм.

## Пĕрре суйсан, тепринче ĕненмеççĕ.

Пĕр ача сурăх кĕтĕвĕ кĕтнĕ. Вăл, кашкăр курнă пек туса, юри: пулăшăр! Кашкăр!.. Кашкăр!..—тесе кăшкăрнă.

Хресченсем чупса пынă, анчах нимĕнле кашкăр та пулман.

Ача çапла ик-виç хутчен те тунă. Пĕрре çав ача кĕтӳ пăхнă çĕре чăнах та кашкăр пынă. Ача кăшкăрма тытăннă:—Кунта, кунта часрах! Кашкăр!..—тенĕ.

Хресченсем, ку ача каллех улталать пулĕ тесе, ача патне пыман. Кашкăр пăхать—никамран хăрамалли те çук. Вăл ирĕккĕнех чылай сурăха пăва-пăва тухнă.

| |
|---|
| **Суйни—сиенлĕ. Пионер, шкул ачи, нихăçан та ан суй, тӳррине кала.** |

## Вĕреннĕ шăнкăрч.

Пĕр ватă кайăкçăн вĕреннĕ шăнкăрч пулнă. Вăл калаçма пĕлнĕ. Старикĕ:

— Ăçта эсĕ, шăнкăрчăм?—тесе ыйтсан, шăнкăрчи çавăнтах:

— Кунта, асатте!—тесе чĕннĕ.

Старик патне унăн тĕлĕнмелле шăнкăрчине итлеме кӳршĕ ывăлĕ çӳренĕ. Пĕрре старик килĕнчен тем ĕçпе тухса кайнă пулнă. Çав хушăра хай кӳршĕ ачи пырса кĕнĕ. Вăл çак паха шăнкăрча вăрласа кайма шут тытнă. Шăнкăрча тытнă та хăй кĕсйине чиксе хунă.

Çав вăхăтра старик пырса кĕнĕ.

— Ăçта эсĕ, шăнкăрчăм?—тесе ыйтнă вăл.

— Кунта, асатте!—кăшкăрса янă шăнкăрч вăрă кĕсйинчен.

## Тухтăр патĕнче.

Петясен йытă пур. Петя унпа питĕ туслă. Вĕсем иккĕш выляççĕ. Хăш чухне йытти Петяна тутинчен те çуласа илет.

Пĕрре Петя чирлерĕ. Амăшĕ ăна тухтăр патне илсе кайрĕ. Йытти те юлмарĕ, вĕсен хыççăнах пычĕ.

Тухтăр Петяна пăхрĕ те:

— Сан хырăмăнта шĕвĕрĕлченсем пур,— терĕ. Çав вăхăтрах тухтăр пӳлĕмне Петя йытти чупса кĕчĕ. Тухтăр ăна курчĕ те:

— Сана йытту пит юратать пулмалла?— тесе ыйтрĕ Петяран.

— Юратмасăр, эпир унпа иксĕмĕр пĕрле вылятпăр, пĕр-пĕрне чуптăватпăр,— терĕ Петя.

Кăна илтсен, тухтăр çапла каларĕ:

— Эсир пĕр-пĕрне юратни лайăх. Анчах йытта нихăçан та хăвна çулама ан пар. Çав шĕвĕрĕлченсене сана йытту ертнĕ. Йытă-кушак таврашне чуптума юрамасть,—терĕ.

---

Петяна шĕвĕрĕлченсем мĕнрен ернĕ?
Тухтăр Петяна мĕн каланă?

*Йытă-кушак таврашне ан чупту, питне-куçна ан çулаттар*

# Таса пурăнма вĕрен.

Эпĕ ирхине 7 сехетре ыйхăран вăранатăп. Вăрансан, вырăн çинче кахалланса выртмастăп. Тӳрех тăрса гимнастика тăватăп та тумланма пуçлатăп. Вырăна пуххса тирпейлетĕп, шăла-çăвара тасататăп, пите-куçа çăватăп. Шурă алшăллипе шăлăнатăп.

Эпĕ эрнере пĕрре мунча кĕретĕп. Кĕпе-йĕме улăштаратăп.

Чĕрнесене кăшламастăп, хачăпала касатăп. Çи-пуçа та вараламастăп, яланах таса çӳретĕп. Манăн алăсем те таса, вĕсене ĕç хыççăнах çăватăп. Алла çумасăр апат çиме лармастăп.

Урайне сурмастăп. Пӳртре тусан кăлармастăп, çӳпĕлеместĕп. Пӳртри сывлăша час-часах уçăлтаратăп.

Эсĕ те ман пек пул, таса пурăнма тăрăш.

---

Эсир ирхине миçе сехетре тăратăр? Кашни ирех шăлсене тасататăр-и? Сирĕн уйрăм алшăлли пур-и?

## Мĕнле çывăрмалла.

1. 9 сехетре çывăрма вырт. 7 сехетре тăр.
2. Çиелти кĕпӳ-йĕмне хывса çывăр.
3. Пуç çинчен ан витĕн.
4. Аллусене ан вит.
5. Виçĕ кунта пĕрре вырăнна тула тухса силле.
6. Çывăрас умĕн те, çывăрса тăнă хыççăн та пӳлĕме форточка е алăк уçса уçăлтар.

# Юмăç пĕтерет, тухтăр пулăшать.

(Анне каласа пани.)

Пирĕн Ванюка пĕчĕккĕ чухне трахома ернĕччĕ.

Эпĕ ăна юмăç патне илсе кайрăм. Юмăç Ванюк куçне тавăрса çуларĕ. Сурчăкĕпе сĕрчĕ, сахăр ватса ячĕ. Çакăн хыççăн Ванюкăн куçĕ пушшех пăсăлса кайрĕ.

Пурăна-киле Ванюк куçне шур илме пуçларĕ. Куç курми пулнипе, Ванюк шкула та çӳрейми пулчĕ.

Ванюк шкула çӳреме пăрахсан, учительпе пионерсем пирĕн пата пычĕç. Мана ачана юмăç патне илсе кайнăшăн ятларĕç. Ванюка тухтăр патне илсе кайма хушрĕç.

Вара эпĕ тепĕр куннех Ванюка больницăна илсе кайрăм. Тухтăр Ванюка больницăна хăварчĕ. Пĕр уйăхран Ванюк болницăран тавăрăнчĕ. Унăн куçĕ тӳрленчĕ. Вăл чиперех куракан пулчĕ. Çавăнтанпа эпĕ юмăç патне ура та ярса пусмастăп.

---

Трахомăпа чирлес мар тесен, таса пурăн. Ирхине, ĕç хыççăн, апат умĕн, апат çисен, çывăрма выртиччен—аллуна çу. Уйрăм, таса алшăллипе шăлăн. Куçна аллупа, кĕпе çаннипе ан шăл. Трахомăлă çын вырăнĕ çине ан вырт.

Куç пăсăлсан, çийĕнчех больницăна кай.

Трахомăпа чирлесен, больницăна вăхăтра çӳре,

Тухтăр мĕн хушнине туса пыр.

## Сивĕ енче.

Иква ирхине юртан тунă пÿртре вă-ранчĕ. Урай варринче чашкăра тюлень çăвĕ çунса ларать. Ун çути пÿрте çутатать, вăлах ăна ăшăтать те. Иква амăшĕ ун çинче апат пĕçерет.

Иква шур упа тирĕ çинчен сиксе тăчĕ. Тиртен çĕленĕ тумтирне тăхăнса ячĕ. Амăшĕ ăна пиншакне, йĕмне, çĕлĕкне пĕр-ле туса çĕлесе панă.

Иква алăк вырăнне карса хунă тире сирчĕ те шăтăкран упаленсе тула тухрĕ. Тулта сивĕ, тĕттĕм.

Кунта хĕлле хĕвел темиçе уйăх хушши пĕрре те тухмасть. Çулла вара темиçе уйăх хушши пĕрре те анмасть.

Кунта йывăç ÿсмест. Çавăнпа та Иква ашшĕ пÿрте юртан тăвать. Çулла вăл тир-сенчен ÿпле тăвать.

## Пăлан.

Пăлан—сивĕ енче пурăнакан выльăх. Сивĕ енче пирĕн выльăхсем пурăнай-маççĕ. Вĕсем ытла пысăк сивĕсене тÿсей-меççĕ. Пăлан тÿсет. Вăл апатне те хăех тупса çиет. Юра чавса, юр айĕнчи шăн курăка çиет.

Сивĕ енче пурăнакан çынсем пăлан ашне çиеççĕ. Пăлан сĕтне ĕçеççĕ. Пăлан



тирĕнчен тумтир ҫĕлеҫҫĕ. Ҫул ҫине каяс пулсан, пăлан кӳлсе тухаҫҫĕ. Пăлан сивĕ енчи ҫынсемшĕн питĕ кирлĕ выльăх. Вĕсем пăлансăр пурăнма та пултараймаҫҫĕ.

## Пăрсем хушшинче.

Инҫетри ҫурҫĕрте пăрлă тинĕс сарăлса выртать. Ҫынсем ĕлĕкренпех ҫак ҫĕршыва ҫитсе тĕпчесшĕн пулнă. Унта ҫитес тесе кайнă ҫынсенчен нумайăшĕ шăнса вилнĕ. Пăрсем хушшинче темĕн чухлĕ карап пĕтнĕ.

Вара ҫынсем ҫак ҫурҫĕрти вырăна сывлăшра вĕҫмелли караппа—дирижабльпе ҫитме шут тытнă. Пысăк дирижабль туса хатĕрленĕ те инҫетри ҫурҫĕрелле вĕҫсе кайнă. Дирижабль тăвăл айне пулнă.

Дирижабль çинчи сынсем радио тăрăх „Пĕтетпĕр, çăлма килĕр“, тесе чĕннĕ.

Çав çынсене çăлма пирĕн ледокол— „Красин“ тухса кайнă. Темиçе кунтан вăл пăрла тинĕсе çитнĕ. Унăн умĕнче йĕри-тавра пăр сарăлса выртнă. Малалла кайнăçемĕн пăр хулăмланса пынă. Ледокола пăра çĕмĕрсе пыма йывăрланса пынă.

Ледокол çинче аэроплан пулнă. Аэроплан пĕтекен çынсене шырама пăрлă хирсем çийĕн вĕçсе кайнă.

Акă аэроплан çинчен аялта çынсем выртни курăннă. Çыннисем чĕрех пулнă. Вĕсене аэроплан çинчен çимелли антарса панă. Радио тăрăх пĕлтернипе, çав çынсем патне карап та çитнĕ. Çынсем çăлăннă. Вĕсем пăрсем хушшинче 50 кун пурăннă.

## Челюскинецсем.

„Челюскин“ парохода Çурçĕрти Аслă тинĕс çулне тĕпчеме янă пулнă. Тĕпчев ĕçне ертсе пыма Отто Юльевич Шмидт юлташа хушнă.

„Челюскин“ аякри çурçĕрелле малалла та малалла ишсе пырать. Вăл малалла пынăçемĕн тинĕс çинчи пăрсем нумайланса пыраççĕ.

Февралĕн 13-мĕш кунĕнче пăрсем парохода пĕтĕмпех хупăрласа çитерчĕç. Пăрсем хĕстернипе пароходăн сулахай аякки шăтса

кайрĕ. Пароход ăшне шыв кĕрсе тулчĕ. Пароход путма тытăнчĕ. Вара пароход капитанĕ Воронин çынсене пăр çине тухма хушрĕ.

Пароход путрĕ. Анчах çынсем, пĕр хăрамасăр, путакан пароход çинчен кирлĕ япаласене кăлармa ĕлкĕрчĕç. Вара пысăк пăр çинче, юрсем хушшинче палаткăсем карса пурăнма тытăнчĕç. Хĕрарăмсемпе ачасем валли пароход çĕмрĕкĕсенчен барак турĕç. Пароход путни çинчен пĕтĕм çĕршыва радио тăрăх пĕлтерчĕç.



О. Ю. Шмидт.

Чăтма çук сивĕ. Анчах челюскинецсем, сивĕрен хăрамасăрах, аэроплансене лармашкăн пăрсене касса тикĕс вырăн тума тытăнчĕç. Пăрсене тикĕслерĕç. Унтан çӳллĕ вышка туса хучĕç. Вышка çине хĕрлĕ ялав çакрĕç.

Радио тăрăх хуйхăллă хыпара илтсенех, Совет правительстви пăрсем хушшинче пысăк хăрушлăхра пурăнакан паттăрсене çăлма аэроплансем ячĕ. Пирĕн çĕршывăн паллă лётчикĕсем челюскинецсене хăрушлăх-

ран хăтарма васкаса вĕçсе кайрĕç. Вĕсене вĕçме çил-тăмансем, тĕтресем, хаяр сивĕсем чăрмантарнă. Вĕсен аэропланĕсем пăрлана-пăрлана ларнă. Çапах та вĕсем малалла та малалла вĕçсе пынă.

Март уйăхĕн 5-мĕш кунĕнче никамран малтан челюскинецсен лагерьне Ляпидевский лётчик вĕçсе çитнĕ. Вăл пăр çинчен малтан хĕрарăмсемпе ачасене лартса илсе кайнă.




Унтан ытти лётчиксем те, вĕçсе çитсе, пăр çинчи çынсене иле-иле кайнă. Апрелĕн 13-мĕш кунĕнче пăр çинчен юлашки ултă çынна лартса илсе тухнă. Челюскинецсене пирĕн паттăр лётчиксем коммунистсен партийĕ тата пирĕн юратнă çулпуç Сталин юлташ пулăшнипе çăлма пултарчĕç. Совет правительстви челюскинецсене çăлнă çичĕ лётчика Совет Союзĕн Геройĕ ятне пачĕ. Челюскинецсене хăтарнишĕн пирĕн мĕнпур

çĕршыв хавасланчĕ. Совет лётчикĕсен паттăрлăхĕнчен пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ.

## Тăхăр уйăх пăр çинче.

1937-мĕш çулта, май уйăхĕнче, пирĕн совет çĕршывĕн çыннисем аэропланпа Çурçĕр полюсне çитсе ларнă. Унччен Çурçĕр полюсĕнче никам та пурăнса курман. Тăватă хастарлă çын: Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров Çурçĕр полюсĕ çинче хĕл



Папанин Ширшов Кренкель Федоров

kaçнă. Хăйсене пурăнмашкăн вĕсем куçса çӳрекен пăр çине палаткăсем туса лартнă. Çилпе ĕçлекен электростанци лартнă.

Çак хастарлă çынсем Çурçĕр полюсне сăнаса пурăннă. Халиччен Çурçĕр полюсĕ çинчен никам та тĕплĕн пĕлмен. Унта тӳсме çук сивĕ, унта чĕрĕ чунсем те çук пулĕ тесе шутланă. Полюс çине юлнă çынсем сăнанă тăрăх, Çурçĕр полюсĕнче те пурă-

нăç чухăн мар. Унта вĕçен кайăксем, тĕрлĕ чĕрчунсем пур.

Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров хăйсем мĕн сăнанисене радио тăрăх пĕлтерсе тăнă. Вĕсем пăр çинче пурăннă. Вĕсен пăрĕ пĕрмаях шуса пынă. 1938-мĕш çулти февралĕн 1-мĕшĕнче вĕсен пăрĕ çурăланса пĕтнĕ. Пăр татăкĕн тăршшĕ 300 метр, сарлакăшĕ 200 метр çеç юлнă. Унтан çав пăр татăкĕ тата çурăлса пĕчĕкленсе юлнă.

Совет правительстви çак нимрен хăраман тăватă çынна пăр çинчен илмешкĕн ледоколсем тата аэроплансем ячĕ. Февралĕн 19-мĕшĕнче Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров вĕсене илме пынă пароходсем çине ларнă.

Пăр татăкĕ çинче 9 уйăх хушши пурăнса нумай усăллă сăнавсем тунăшăн Совет правительстви çак чаплă çынсене Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Вĕсене Ленин орденĕ парса наградăланă.

## „Седов“ ледокол.

1937-мĕш çулта „Седов“ ледокол Çурçĕрти Аслă тинĕс çулĕпе ишсе пынă. Чылай вăхăт иртнĕ. Хĕл ларнă. Çул çинче пăрсем йышлăлансах пынă. Талккишпех сарăлса выртакан пăр ледокола хĕссе пынă. Пăрсем хĕстернипе ледоколăн рулĕ çĕмĕ-

рӗлнӗ. Ледоколӑн пӑрсем хушшинче хӗл каҫма чарӑнса тӑмалла пулнӑ. 1937-мӗш ҫулхи октябрӗн 23-мӗшӗнче ледокол пӑрсем хушшинче хӗл каҫма чарӑннӑ.

Океанри пӑрсем, ледокола хӗстерсе илсе, хӑйсем куҫнӑ май ӑна та шутарса пынӑ. Ҫапла майпа ледокол пӑрсем хушшинче икӗ ҫул та виҫӗ уйӑха яхӑн куҫса пынӑ. Вӑл Ҫурҫӗрти пӑрлӑ океан тӑршшипе шуса тухнӑ.

Ледокол ҫинчи ҫынсем ку вӑхӑтра наука тӗпчевӗсем, сӑнавсем туса пынӑ. Хастарлӑ 15 ҫын, хӑйсен пурӑнӑҫне хӗрхенмесӗр, совет наукине малалла ярассишӗн вӑй хурса ӗҫленӗ.

1940-мӗш ҫулхи январь уйӑхӗнче „Иосиф Сталин" ледокол „Седова" пӑрсем хушшинчен кӑларнӑ. Хастарлӑ 15 ҫынна Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем пысӑк хаваспа кӗтсе илнӗ.

Совет правительстви ледокол капитанне Бадигин юлташа тата унпа пӗрле пулнӑ хастарлӑ 14 ҫынна Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ, Ленин орденӗ тата „Ылттӑн ҫӑлтӑр" медалӗ парса наградӑланӑ.

## Тӑван ҫӗршыв.

Ҫӗршывра, куратпӑр халӗ,
питӗ паттӑр ӳсӗмпе
ҫитӗнет хули те ялӗ
аслӑ Ленин ҫулӗпе.

Çитĕнет тăван çĕршывăм.
Хĕвел пек ăшшăн савса,
ӳстерет ăна çулпуçĕ—
Сталин, аслă вăй хурса.

Вĕçĕмсĕр ăна саватпăр,
хĕвел евĕр аттене.
Вĕренсе ӳссе пыратпăр,
пирте савăнăç, телей.

Вăл пире хавaслăх пачĕ,
Ленин пек пулма вĕрентрĕ.
Конституци туса пачĕ,
кунçула хавaслăх кĕртрĕ.

## Ăшă енче.

Пирĕн патăмăртан кăнтăр еннелле питĕ инçе кайсан, ялан ăшă тăракан çĕршывсене тĕл пулатпăр. Ку çĕршывсенче нихăçан та хĕл пулмасть, юр çумасть. Хĕвел питĕ çӳле хăпарать, кăнтăрлара вăл шăп пуç тӳпи тĕлĕнче пулать.

Ăшă енче тĕрлĕ йывăç-курăксем йышлăн ӳсеççĕ. Унта арăслан, слон, тигр тата ытти тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем пурăнаççĕ. Кунти пекех унта çынсем те пурăнаççĕ.

Пирĕн патăмăрти вĕçен кайăксем кĕркунне çавăнта каяççĕ.

Ăшă енче хăшпĕр çĕрте çулталăкĕпе те çумăр çуман вырăнсем пур. Унта вара нимĕн те ӳсмест. Унта пушă хир. Пĕр хăйăр анчах сарăлса выртать.



## Слонпа унӑн ҫури.

Сунарҫӑсем слон амине тытас тесе хӑвалана. Слон ами хӑйӗн ҫурипе пӗрле тарса хӑтӑлма тӑрӑшнӑ.

Сунарҫӑсем слон амине тарӑн шыв хӗрринелле хӑваласа пынӑ. Шыв хӗрне ҫитсен, слон ами хӑйӗн ҫурине сӑмси вӗҫӗпе ҫавӑрса хӗстернӗ те ишме тытӑннӑ. Слон ҫури шывран хӑранӑ, вӑл ишме пӗлмен. Амӑшӗ ӑна шыв ҫийӗн ҫӳлте тытса пынӑ.

Сунарҫӑсем слон ами хӑйӗн ҫурине мӗнле хӗрхеннине курнӑ та, ӑна хӑвалама чарӑннӑ.



## Çуркунне пулать.

Йăл-йăл пăхать сар хĕвел:
кунран кунах ăшăтать.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
çур ăшшине парăнать.

Пур çĕрте те шурă юр
хĕвелпеле пусăрнать.
Пĕчĕккĕнех çуна çуль
навусланать, хуралать.

Ял хĕрринчи Митраппан
сарай çинчен юр тăкать.
Пĕчĕк ача—Сар Иван—
шăхлич калать, савăнать.

# Çуркунне килет. Вĕçен кайăксене кĕтсе илер.

**Сăнаса пырăр.** Юр хĕллехи пекех-и? Çурт çийĕсен хĕррисенче тумла пăрĕсем пур-и? Йывăç папаккисем сарăлаççĕ-и? Мĕнле кайăк хăçан килет? Кун кĕскелчĕ-и, вăрăмланчĕ-и? Выльăх-чĕрлĕхсен çăмĕсем мĕнле улшăнаççĕ? Колхозра мĕнле ĕçе хатĕрленеççĕ?

---

Çуркуннехи пурăнăçа сăнама тетрадь тăвăр та кашни кунхи сăнавсене çырса пырăр.

## Тавлашу.

Петяпа Хветке ĕнер тавлашса илчĕç. Хветки:—Çуркунне енне кайсан çĕр кĕскелет,—тет.

Петти:—Çук апла мар, çуркунне кун вăрăмланать,—тет.

Хветке:—Тĕрĕс мар, çуркунне çĕр кĕскерех,—тесе кăшкăрать. Петя ăна хирĕç тарăхса кăшкăрать:—Суян. Çуркунне кун вăрăмрах,—тет.

— Эсĕ ху суян,—тет Хветки.

Хайхисем, хĕрсе кайса, хытăран хыт ăкăшкăрма пуçларĕç. Нихăшĕ те пĕр-пĕрне кăшкăрса çĕнтереймеççĕ. Юлашкинчен, аптăранипе, учитель патне пычĕç. Учителе каласа

панă чух каллех тавлашма пуçларĕç. Учитель кăшт итлесе тăчĕ те кăмăллă сасăпа:

— Ан кăшкăрăр. Хăвăр мĕн каланине шухăшласа илĕр-ха,—терĕ.

Ачасем шухăшласа пăхрĕç те хăйсенчен хăйсем кулса ячĕç.

---

Шухăшласа пăхăр-ха: Хветке тĕрĕс каланă-и, е Петя-и?

## Тумтир улшăнать.

Çанталăк ăшăтрĕ. Хĕллехи хаяр сивĕсем иртсе кайрĕç. Вĕсем халь часах таврăнас çук.

Ĕнтĕ выльăхсене вăрăм çăм кирлĕ мар. Вĕсем хăйсен хĕллехи çăмне тăкма пуçларĕç. Тасалса, якалса кайрĕç. Мулкач хĕлле шап-шурă çўретчĕ, халь тĕксĕмленме тытăнчĕ. Хĕлле юр çинче çўреме ăна шурă тĕс кирлĕ пулнă. Çуркуннепе çу кунĕсенче шурă тĕс аякранах палăрать. Тĕксĕм тĕс мулкача тĕрлĕ тискер кайăксенчен те, этемрен те сыхлать.

Этеме те текех кĕрĕксем, тăлăпсем кирлĕ мар. Çăматăсене те хывма вăхăт çитрĕ. Сăран атă е пушмак тăхăнмалла. Кĕрĕксене хыватпăр, сăкман- пиншак тăхăнатпăр. Ăшă çĕлĕк кирлĕ мар. Тавай пире картус пар.



## Тимĕрç.

Чăнкки-чанкки янратса,
çырма тăрăх сас каять.
Чăлтăр-чăлтăр хĕмсемпе
тимĕрç лаççи çутăлать.

Тимук, Тимук тимĕрçĕн
пичĕ тăрăх тар юхать.
Хĕрлĕ-кăвак-симĕсĕн
плуг тимĕрри хĕм сапать.

Тимĕр, тимĕр, тимĕрĕм,
хĕр-ха часрах, тимĕрĕм.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
колхоз хирĕ хуралать.

Чăнкки-чанкки, чăнкки-чанкки!
çыпçăн, хурçă, лайăхрах.
Çерем çĕтсе тыр аксан,
тырри пултăр вăйлăрах.

## Çуркунне.

Акă шавлă, ăшă çуркунне персе çитрĕ. Сарă хĕвел йăлтăртатса кулать. Пўртре кăшт та ларас килмест. Шкултан тавăрăнсан, каç пуличченех тулта выляса çўретпĕр. Пўрте урок вĕренме анчах кĕретпĕр.

Пирĕн колхоз çуракине хатĕр. Плугсене, сўресене, лаша хатĕрĕсене юсаттарса хунă. Суха тума машина-трактор станципе договор тунă. Хамăр колхозран икĕ çын трактористсен курсĕнче вĕренсе килчĕç.

Колхозниксем хушшинче çураки вăхăтĕнче камăн мĕн ĕçлемеллине паллă туса хунă. Кашниех мĕн ĕçлемеллине пĕлсе тăрать. Вăрлăха суртласа тасатнă. Акма пуçличчен формалинпа чўхесси анчах юлнă. Лашасем чылай вăхăт лайăх апат çисе мăнтăрланнă.

Эпир те колхоза çуракине хатĕрленме пулăшатпăр. Вăрлăхсене шăтарса пăхрăмăр. Стена хаçачĕ кăлартăмăр.

Хамăр шкул умне йывăççем лартма, чечексем акма хатĕрленетпĕр.



## Шăнкăрч.

Пур кайăкран маларах
килтĕм вĕçсе васкаса,
ывăннине пĕлмесĕр,
юрла, юрла, савăнса.
Çурт тăррине лартăм та
янăратрăм юррăма.
Савăнтартăм, култартăм,
ачасене сăввăмпа.
Йăпăрт çеç хам йăвана
кĕре-кĕре тухатăп.
Ăшă вырăн тумашкăн
тĕксем, çӳçсем пухатăп.

---

**Тупмалли юмах:** Пуртăсăр, алăсăр хăйне валли çурт тăвать.

## Пăр кайни.

Пирĕн ял хĕррипе Çавал ятлă шыв юхса выртать. Хĕлле çав шыв çинче пăр шăнса





Çак картинăсем çине пăхса, çакăнта мĕн пулнине каласа парăр.

ларать. Эпир пӑр ҫинче конькипе ярӑнса савӑнатпӑр. Ҫуркунне вара кашни кунах ҫырма хӗрне кайса пӑхатпӑр, пӑр каяссине кӗтетпӗр.

Акӑ, хирсенчен, вӑрмансенчен шыв анса ҫырмари пӑра хӑпартрӗ. Пӑр кайнине курас тесе, кашни кунах кӗтсе тӑратпӑр. Пӗр ӑшӑ кун, кӑнтӑрла иртсен, пӑр ҫӗмӗрӗлсе хуллен аналалла шӑва пуҫларӗ. Каҫ еннелле пӑр тапранса та кайрӗ. Эпир, ачасем, ялӗпех шыв хӗрне пуҫтарӑнтӑмӑр.

Пӑр татӑкӗсем юхса, пӗрне пӗри хӑвалаҫҫӗ. Шарт! туса каталаҫҫӗ.

Кӗпер тӗлӗнче пӑр капланма пуҫларӗ. Ниепле те кӗпер айӗнчен тухса каяймасть. Кӗпер шатӑртатма тытӑнчӗ. Ҫав вӑхӑтра ҫынсем пакурсемпе, кӗреҫесемпе, шалҫасемпе чупса ҫитрӗҫ. Пӑра ката-ката, кӗпер айнелле тӗрткелесе ячӗҫ. Кӗпере ҫӗмӗрме памарӗҫ.

---

Пӑр кайнине курни ҫинчен каласа парӑр.

## Сентти.

Чипер ача Сентти пур,
чупса ҫӳрет урамра.
Кӗвентине утланса
ача вылять лашалла.
Чипер ача Сентти пур
чупса килет лашипе.
Хӑйӗн пӗчӗк чӗлхипе

пакăлтатать инкĕшпе.
Кĕвентине утланса,
инкĕш патне çĕмĕрсе
кĕрсе кайрĕ ахăрса.
Çапать паттăр лашине
хăй аллинчи хуллипе.

## Миша шыв арманĕ туни.

Çуркунне пулчĕ. Урамсем тăрăх шыв шавласа юхать. Ачасем шыв юхнă çĕрте выляççĕ. Вĕсем шыв тăрăх кимĕсем яраççĕ, пĕве пĕвелеççĕ. Миша та ĕçлет. Вăл шыв арманĕ тăвасшăн тăрăшса çӳрет. Амăшĕнчен пушă туплашка илчĕ. Туплашкана тăвата тĕлтен шăтарчĕ. Çав шăтăксене пĕчĕк çеç хăйă таткисем чикрĕ. Туплашка витĕр патак тирсе, ăна икĕ пĕчĕк юпа хушшине вырнаçтарса лартрĕ. Мишан шыв арманĕ пулса та тăчĕ.



Шыв юхать, вăл Миша арманне хăвăрт çавăрать. Миша хавасланнă. Вăл юлташĕсене арман çавăраннине курма чĕнет.

## Çуркунне.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел сават тĕнчене,
хĕл ыйхинчĕн вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçен хир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
ырă шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен
лайăх юрри янăрать.
Çўлте пĕлĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
путек-сурăх сиккелет.

## Трактор.

Çывăрнă çĕртех Васук хăлхине темĕскер кĕр-кĕр! тенĕ сасă кĕрсе кайрĕ. Васук, вырăн çинчен сиксе тăрса, чўречерен пăхрĕ. Кĕрленĕ сасă çывхарсах пырать.

Васук урама чупса тухрĕ. Урамра халăх туллиех. Ваттисем те, ачасем те пухăннă. Васук вĕсем патне чупрĕ. Çав вăхăтрах уй хапхинчен темĕнле машинăсем хыттăн кĕрлесе кĕчĕç.

— Ара, ку трактор-çке!—терĕ Васук, чухласа илсе.

Васук халăх ушкăнне пырса тăчĕ. Çав вăхăтра митинг уçăлчĕ. Пĕр хура çўçлĕ çын трактор çине хăпарса тăчĕ те колхозниксене салам каларĕ. — Машина-трактор станцийĕ сирĕн колхоза ака тума тракторсем ячĕ. Çуракине ăнăçлă ирттерĕр,—терĕ.

Унтан колхоз правлени председателĕ тухса каларĕ. Вăл машина-трактор станцине тракторсене вăхăтра янăшăн тав турĕ.

---

Çывăрнă çĕртех Ваçук мĕн сассине илтнĕ? Тракторпа колхозра мĕнле ĕçсем тăваççĕ?



## Хурçă ут.

Кĕр-кĕр-кĕр! кĕрлерĕ трактор.
Тухрĕ вăл колхоз хирне.
Тĕпренех пуçларĕ паттăр
çавăрмашкăн тăприне.
Сухапуç чысне çухатрĕ,—
машинлатпăр уйсене.
Хурçă ут тухса аркатрĕ
ĕмĕрхи йăрансене.
Хурçă ут чупать хир урлă,
хир питне чĕлет, сĕвет.
Машинăпа акнă тырпулă
уйсене илем кӳрет.

## Пыл хурчĕсен юрри.



Ылттăн çунатпа
йăл-йăл куранса
вĕл-вĕл вĕçетпĕр
колхоз садĕнче.

Ылттăн çуркунне,
чаплă çуркунне...
ытармалла мар
сана, çуркунне.

Хитре чечексен
пылĕсене ĕçсе,
пинĕ-пинĕпе
çӳретпĕр вĕçсе.

Ылттăн çуркунне,
чипер çуркунне...
ытармалла мар
сана, çуркунне.

## Фабрикăсемпе заводсем.

Марукăн пиччĕшĕ шкулта вĕренет. Пĕрре Марук пиччĕшĕнчен ыйтать.

— Пирĕн колхозăн тимĕрç лаççинче темĕнле япала та тăваççĕ. Çав трактора мĕнле тăваймаççĕ вара,—тет.

Пиччĕшĕ Марука ăнлантарса парать.

— Трактора тимĕрç лаççинче тумаççĕ. Ăна машинăсемпе ĕçлесе тăваççĕ. Кашни пайне уйрăм машина тăвать. Машинисем



пысăк çуртсенче лараççĕ. Çав пысăк çуртсене фабрика е завод,—теççĕ.

Фабрикăсенче темĕнле япала та туса кăлараççĕ. Акă эсĕ тăхăннă кĕпене фабрикăра машинăсемпе тĕртсе кăларнă çитецран çĕленĕ. Кĕпе хуралсан, заводра тунă супăньпе çуса тасататпăр. Самовара та заводра тунă.

Заводсенче рабочисем ĕçлеççĕ. Вĕсем пирĕн пек тырă-пулă акса тумаççĕ. Эпир тырра государствăна сутатпăр. Государство çав тырра рабочисене сутать. Рабочисем туса кăларнă япаласене эпир кооперативсем урлă илетпĕр. Çапла колхозпа хула пĕрпĕрне пулăшса тăраççĕ.

---

Фабрикăра, заводра туса кăларнă мĕнле япаласем пур сирĕн колхозра?

## Эпĕ хула курни.

Манăн хулана пит кайса курас килетчĕ. Пĕрре мана атте хăйпе пĕрле Шупашкара илсе кайрĕ.

Эпĕ, савăннипе, вăрăм çула сисмерĕм те. Кĕçех хулана çитсе те кĕтĕмĕр.

Хулана пырса кĕнĕ çĕрте урамăн икĕ айăккипе пĕр пек илемлĕ çуртсем ларaççĕ.

— Кунта рабочисем пурăнаççĕ,— терĕ атте. Хула варнелле кĕнĕçемĕн ик-виç хутлă çуртсем нумайлана пуçларĕç.

Пĕр пысăк тăватă хутлă çурт тĕлне çитрĕмĕр. Кăна Пичет çурчĕ теççĕ. Кунта хаçатсем, журналсем, кĕнекесем кăларса тăраççĕ,—терĕ атте.

Атте мана хула тăрăх нумай кăтартса çӳрерĕ. Советсен çуртне, театр çуртне, шкулсемпе больницăсене куртăмăр. Атăл хĕрне çитрĕмĕр. Пристаньсен çумĕнче пароходсем тăраççĕ. Атăл хĕррине пынă чух темĕскер хыттăн кăшкăртма пуçларĕ. Ку—завод сасси пулнă иккен.

Хулара автомобильсем, автобуссем питĕ йышлă. Автобус çине эпир те ларса куртăмăр.

## Автобус.

Тӳрĕ, тикĕс çулпала
пĕр автобус вĕçтерет,
хăйне ирĕк çул пама
вăл таçтанах систерет.



Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!
Ай-хай лаши хăраса
çул айккипе сиктерет.
Автобусĕ васкаса
тата хытă вĕçтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулна лайăхрах асту.



## Пĕр ĕç.

Унтрипе Ахмет пĕрнепĕри пĕлмеççĕ.

Унтри Мускавра пурăнать. Вăл ситец тĕртекен фабрикăра ĕçлет.

Ахмет Туркестанра пурăнать. Вăл хирте ĕçлет, çĕрмамăкĕ акса ÿстерет.

Унтрипе Ахмет Совет Союзĕнче тĕрлĕ вырăнта пурăнаççĕ. Вĕсем кашни ăрасна чĕлхепе калаçаççĕ.

Вĕсем пĕр-пĕринчен питĕ инçетре пурă-наççĕ пулин те, пĕр ĕçех тăваççĕ—çитец тă-ваççĕ.

Ахмет колхозра çĕрмамăк ўстерет. Унтри Мускавра çĕрмамăкĕнчен çитец тĕртсе кă-ларать.

## Колхоз пурлăхĕшĕн.

Колхоз çуртырри вăрлăхне тасатса хатĕр-лерĕ. Вăрлăха кĕлете турттарса хучĕ те Çтап-пан пиччене хурал тăма хушрĕ.

Халăх тăшманĕсем колхоз вăрлăхне вăр-ласшăн. Анчах мĕнле вăрлас? Çтаппан пич-чене кĕлет умĕнчен аяккалла мĕнле уйăрса ярас?



Хайхи тăшмансем Çтаппан пичче пўртне вут тĕртме шутлană. Хăй çурчĕ çуннине кур-сан, чупсах кайĕ, тенĕ вĕсем.

Çтаппан пичче вăрлăха сыхлать. Каçĕ

ытла та лăпкă. Пĕр сас-чĕвĕ те çук. Сасартăк çынсем кăшкăрашни илтĕнчĕ. Пушар çулăмĕ пĕтĕм яла çутатса ячĕ. Халăх чупкалать. Вăл Çтаппан пӳрчĕ еннеллеваскать.

Анчах тăшмансен ĕçĕ тухмарĕ. Çтаппан пичче кĕлет умĕнчен каймарĕ. Вăл çаплах вăрлăха сыхласа тăчĕ. Унăн пĕтĕм пурлăхĕ çунса кайрĕ. Çапах та вăл колхоз вăрлăхне çаратма памарĕ.

Колхоз Çтаппана премИ пачĕ: çĕнĕ пӳрт лартса пачĕ, тĕрлĕ тумтирсем илсе пачĕ.

## Пирĕн колхоз мĕн акса тăвать.

Пирĕн колхоз тĕрлĕ тырпул акса тăвать. Колхозниксене çиме, государствăна сутма тата ваккăн сутма ырашпа тулă акать. Вырьăхсем валли сĕлĕ акать. Хăйĕнчен ытлашши сĕлле государствăна сутать.

Пир-авăр тума йĕтĕнпе кантăр акса тăвать. Тата колхоз табакпа çĕрулми лартса ӳстерет. Пăрçа, клевер, вика, хуратул акса тăвать.

Çимĕç пахчине хăяр, помидор, нимĕç пăрçи, çарăк, кишĕр, сухан, вырьăх кăшманĕ лартать.

## Ĕç уявĕ.

Пурте тухăр тумланса,
тухăр капăр.
Паян майăн уявне
уявлатпăр.




Паян пурте савăнатпăр
чаплă куншăн.
Ялавсем йăтса утар
эпир уншăн.
Кирлĕ мар пире мăнкун—
тĕн ултавĕ.
Пирĕн çĕнĕ аслă кун—
Май уявĕ.
Пурте тухăр тумланса,
тухăр капăр.
Паян майăн уявне
уявлатпăр.

## Майăн пĕрремĕш кунĕ.

Паян пирĕн май уявĕ ячĕпе митинг пулчĕ. Митингра пĕр ватă рабочи пире май праçникĕ çинчен каласа пачĕ.

— Май уйăхĕн пĕрремĕш кунĕ вăл—пĕтĕм тĕнчери пролетарисен уявĕ. Пĕтĕм тĕн-

чери пролетарисем çак кун хӑйсен вӑйӗсене тӗрӗслеççӗ. Капитализмлӑ çӗршывсенче пролетарисем буржуазине хирӗç кӗрешме вӑй пухаççӗ. Çав кун пӗтӗм тӗнчери ӗçхалӑхӗ урама уяв тума тухать. Вӑл уяв пролетарисем пӗрле кӗрешсе, капитализм пусмӑрӗнчен ирӗке тухассине пӗлтерет.

Патша вӑхӑтӗнче пирӗн государствӑра май уявне уявлама ирӗк паман. Майӑн пӗрремӗшӗнче праçник тунӑшӑн патшапа капиталистсем рабочисене питӗ хытӑ хӗстернӗ. Вӗсен йыттисем—жандармсем—праçник тӑвакансене пӑшалсемпе пере-пере салатнӑ, саламатсемпе хӗненӗ, тӗрмене тытса хупнӑ.

Анчах, темӗнле хӗн пулсан та, Российӑри рабочисем Майӑн пӗрремӗшне 1891-мӗш çултанпа кашни çулах уявланӑ. Жандармсем курасран митингсене вӑрманта е ытти çӗрте пытанса туса ирттернӗ. Жандармсем сасартӑк пырса тытасран хурал тӑратнӑ.

Халь, Октябрьти социализмлӑ революци пулнӑранпа, эпир май уявне ирӗклӗн савӑнса уявлатпӑр. Вӑл кун кашни çулах хамӑр тунӑ çитӗнӳсене шута илсе тӗрӗслетпӗр. Ют çӗршыври рабочисемпе çыхӑнӑва çирӗплетсех пыратпӑр.

---

Майӑн пӗрремӗшӗ камсен уявӗ? Çак кун пролетарисем мӗн тӑваççӗ? Эсир май уявне мӗнле ирттертӗр? Ăçта тухса çӳрерӗр? Мӗн-мӗн куртӑр? Мӗнле юрӑсем юрларӑр? Шкулта мӗн турӑр?

## Вăрмана кайни.

Çуркунне пире учитель çывăхри вăрмана илсе кайрĕ. Вăрманăн çуркуннехи пурăнăçне сăнаса çÿрерĕмĕр. Вăрманта сывлăш ялти пек мар, таса, калама çук уççăн туйăнса кайрĕ.

Вăрмантан эпир йывăç турачĕсем касса килтĕмĕр. Вĕсене кĕленче ăшне хăшне шывпа, хăшне шывсăр лартрăмăр. Вара çаксене сăнаса пĕлтĕмĕр.

Кашни йывăçăн туратсем пур. Турат çинче папаккисем пур. Папаккисем ăшĕнче пĕчĕк çулçăсем пур. Хĕллехи вăхăтра вăл çулçăсем хытă хупăпа чĕркенеççĕ. Çуркунне, нÿрпе тата хĕвел ăшшипе кÿпчесе, хуппине сирсе яраççĕ те симĕсленме пуçлаççĕ.

Çапла вара йывăçсем çулçă кăларса симĕсленеççĕ.

---

Вăрмана кайса, йывăç турачĕсене касса илсе, шыв тултарнă кĕленче ăшне лартăр. Туратсене мĕн вăхăтра лартнине, хăш турат миçе кунтан çулçă сарнине сăнаса çырса пырăр.

## Хăраманскер.

Сергейпе Павăл вăрмана каяççĕ. Çул çинче Сергей Павăлран ыйтать.

— Павăл, эсĕ кашкăрсенчен хăратăн-и? —тет.

Павăл мухтанать:

— Мĕн хăрамалли пур вĕсенчен? Чукмарпа пуçĕсенчен парăп та вĕлерсе хурăп, —тет.

Вăрмана кĕчĕç хайхисем. Вăрманта тĕттĕм, йывăççен хўттипе хĕвел те курăнмасть. Утса пынăçемĕн ура айĕнче вĕтĕ хăрăк туратсем шăтăртатаççĕ, çулçăсем чăштăртатаççĕ.

Павăл хыçалалла çавăрăнса пăхкаласа илет, Сергее аллинчен яра-яра илет.

Сергей ăна калать:

— Хăратăн-им?—тет.

Павăл хăрасса хăрать, анчах хăй хăранине палăртасшăн мар—вăтанать.

— Мĕн хăрамалли пур, эпĕ пĕчĕк ача мар вĕт,—тет.

Çав вăхăтра Сергей Павăла хăратмашкăн юриех:

— Кашкăр пур!—тесе кăшкăрса ячĕ. Павăл хăранипе тўрех пĕшкĕнсе ларчĕ:

— Анне-е!—тесе çухăрса ячĕ.

Сергей унтан кулать:

— Эх, Павăл, хăраманскер,—тет.

## Атте пахчи.

Атте пахчи, улма пахчи—улмалăх.
Улми пиçет, хĕрелет,
пире çиме илĕртет.

Айтăр каяр, халех каяр пахчана,
улми пире кĕтет-çке,
татса çиме чĕнет-çке.

## Пахча тăшманĕсем.

Май уйăхĕн вĕçнелле пирĕн шкул пахчине çарăк, тĕрлĕ çимĕçсем сип-симĕс шăтса тухрĕç. Эпир вĕсене шăваратпăр. Çумкурăк шăтсанах, ăна кăкласа тăкатпăр. Çимĕçсем лайăх ӳсни пире савăнтарать.

Анчах пахчана чăх-чĕпсем кĕрсе йăрансене пăса пуçларĕç. Вĕçен кайăксем те пыра-пыра çамрăк калчана сăхса илеççĕ.

Чăхсенчен хăтăлма пахча картине çӳллĕрех тытрăмăр.

Кайăксене хăратма йăран çине катемпи лартрăмăр. Тин вара пирĕн йăрансем пăсăлми пулчĕç.

Пирĕн çимĕçсем вăй илсе, илемлĕн ешерме те пуçланăччĕ. Унччен те пулмарĕ, вĕт хурт тапăнса, çамрăк çулçăсене пĕтере пуçларĕ. Мĕн тăвас? Çуллахи çанталăкра хурт-кăпшанкă питĕ шутсăр ĕрчет. Вĕсене часрах пĕтермелле.

Ку тăшмана пĕтерме учитель эмел илчĕ. Купăста айне, çарăксем хушшине кĕл сапса тухрăмăр. Учитель эмелне сапрĕ. Вĕт хурт пĕтрĕ.

## Вăрманти çил-тăвăл.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
вĕçĕ хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуççăр çил тухсан,
чарăнассăн туйăнмасть.

Тапхăр-тапхăр çил килет,
пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет.
çĕре çитех авăнса.

Хура пĕлĕт пĕрмаях
шăвать вăрман тăрринче,
ярать çиçĕм çĕр çурсах
хура пĕлĕт хушшинче.

Аçа çапать, шартлатать,
пĕтĕм тĕнче кисренет.
Çумăр çырма пек юхать,
лупашкасенче кĕрлет.



## Çулла.

Çулла. Июнь уйăхĕн пуçламĕшĕ. Хĕвел кунĕ-кунĕпех пирĕнпе вылять. Ĕçленĕ çĕрте те вăл пирĕнпех.

Ирхине тăрсан, хĕвел çуттинче сывлăм йăлтăртатни хаваслантарать. Сывлăм çутă шăрçа пек курăк çинче чĕтресе ларать.

Сывлăм çинче колхоз кĕтĕвĕ йĕр туса кайнă.

Урамăн икĕ енче хурăнсем, йăмрасем сарăлса ларaççĕ. Йывăççен айĕнчен хăма е черепица витнĕ çуртсем курăнаççĕ. Вĕсем—пирĕн колхозăн çурчĕсем.

Хирелле тухсан, тырă-пулă çитĕннине курса савăнатăн. Пахчасенче тĕрлĕ çимĕçсем ӳсеççĕ. Çырла пиçет.

Ыран-паянах вăрмана икĕ эрнелĕх лагере каятпăр. Унта эпир сывлăха тĕреклететпĕр. Гимнастика тăватпăр. Шыва кĕретпĕр. Хăйăр çинче выртса хĕвелпе пиçетпĕр. Вăхăтра апат çиетпĕр.



**Хĕвел, шыв, таса сывлăш—сывлăх тусĕсем. Хĕвелпе пиçер. Шыва кĕрер. Таса сывлăшра выляр. Сывлăхлă пулар.**

# Çуллахи ĕççем.

Колхозăн çулла ĕç питĕ нумай.

Çимĕç пахчинче тĕрлĕ çимĕççем çитĕнеççĕ. Çав вăхăтрах çумкурăкĕ те ӳсет. Ăна çумласа пăрахмалла. Çĕрулмине купаламалла. Хăяр пулать. Пулса çитнĕ хăярсене пуçтармалла. Пасара илсе тухмалла.

Улăхсенче курăк çитĕнет. Акă часах колхозниксем утă çулма та тухĕç. Çӳллĕ симĕс



курăка çивчĕ çавапа е машинăпа çулса пăрахĕç. Типĕтсе капансем туса хурĕç.

Утă çулса пĕтернĕ çĕре ырашĕ пулса çитет. Ыраш вырмалла. Хăш чухне тата ыраш вырса пĕтеричченех сĕлĕ те пулса çитет.

Ĕçĕ нумай пулин те, халь колхозра ĕçлеме çултан-çул çăмăлланса пырать. Чылай колхозсенче халь сухана тракторсемпе тăваççĕ. Тырра комбайнпа выраççĕ. Комбайн вырать, çапать, çавăнтах сăвăрса та пырать.

## Утă туни.

Шап-шур халăх ут çулать.
Унта-кунта çын сасси.
Çава вăш-вăш вăшкăнать,
улăхĕпе ун сасси.

Халăх çăмăл калаçать,
пур ĕç çынĕ хĕпĕртет.
Хĕвел кулса çутатать,
çулнă утта типĕтет.

Вăрман, пуçне пĕшкĕртсе,
сивĕ сывлăш кăларать.
Утă çулан çынсене
тартан-шуртан хăтарать.

## Панулми.



Ытла аван ку улма!
Çап-çаврашка, тап-
таса,
тутлă шăршлă,
йăмăх хĕрлĕ,
пыл тултарнă, тейĕн
çав!
Вăрри витĕр
курăнать.

## Çырма.

Çырма юхать кĕрлесе
аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

Тăрă шывăн ăшĕнче
кăвак пĕлĕт явăнать.
Вată йăмра тайăлса,
тĕсне пăхса савăнать.

Акă кĕпер çиййĕнче
пулăç ларать вăлтапа,
йăпăрт-йăпăрт пуллине
улталасшăн ăманпа.

---

**Тупмалли юмах:** Çунатлă—вĕçеймест, ури çук—хăваласа тытаймăн.

## Çуллахи çанталăк.

Çулла кун питĕ вăрăм. Июнь уйăхĕнче кун çĕртен икĕ хут ытла вăрăмрах. Хĕвел нихăçанхинчен çӳле хăпарать. Кăнтăрла тĕлĕнче вăл пĕлĕт тӳпинех çывхарать. Çавăнпа япаласен мĕлки кĕске пулать.

Шывра та, вăрманта та, хирте те пурăнăç вĕрет. Шывра пулăсем, тĕрлĕ хуртсем, шапасем ишсе çӳреççĕ. Унтах тата рак та пурăнать.

Вăрманта тĕрлĕ йывăççем çитĕнеççĕ: юман, хурăн, вĕренę, шĕшкĕ, хурама, çăка, чăрăш, хыр. Çырласем, кăмпасем ӳсеççĕ.

Шурлăхра хăях-хăмăш, мăк ӳсет.

Хирте тĕрлĕ курăк ӳсет, тырă-пулă пулса çитĕнет. Çавăнтах тата пире сиенлĕ çумкурăкĕсем те ӳсеççĕ: пиçен, хурхух, йытпырши, чăрăштăрри. Вĕсене эпир çумласа тăратпăр.

# Çулталăк хушши.

Шурă юр ирĕлет,
çеçен хир чĕрĕлет,
ешĕл курăк ӳсет...
  Вăл хăçан пулать?

Хĕвел хытă хĕртет,
ăшă çил вĕркелет,
сар ыраш çитĕнет...
  Ку хăçан пулать?

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать.
  Вăл хăçан пулать?

Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
  Ку хăçан пулать?

---

## ÇУЛТАЛĂКРИ УЙĂХСЕМ.

Январь, февраль, март, апрель, май, июнь, июль, август, сентябрь, октябрь, ноябрь, декабрь.

## ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕН ТУППИСЕМ.

7 страница: Юр.
10 страница: Пăр.
12 страница: Çăматă.
14 страница: Юр.
48 страница: Лаша.
50 страница: Лаша.
55 страница: Йытă.
57 страница: Кашкăр.
80 страница: Чĕкеç.
101 страница: Пулă.

---

# ТУПМАЛЛИ


*стр.*

Хӗллехи ир . . . . . . . . . 3
Шкула . . . . . . . . . . . 4
Санӑн вӗренме каймалла . —
Ӑмӑрту . . . . . . . . . . 5
Хӗл (юмах) . . . . . . . . 6
Ҫапла-и, ҫапла мар-и? . . . 7
Конькипе . . . . . . . . . —
Кая юлчӗҫ . . . . . . . . . 8
Пирӗн ёлка . . . . . . . . 9
Шывран кӗленче туни . . . 10
Плотниксен юрри . . . . . 11
Урамра . . . . . . . . . . —
Хӗллехи тумтир . . . . . 12
Юртан кӗлетке туни . . . 13
Ӑшӑтман кӗрӗк . . . . . . —
Йӗлтӗрпе . . . . . . . . . 15
Юр айне пулнӑ ҫын . . . 16
Колхозниксен хӗллехи ӗҫӗсем . . . . . . . . . . . 17
Хӗллехи каҫ . . . . . . . —
Икӗ колхозник . . . . . . 18
Владимир Ильич Ленин . . 19
1924-мӗш ҫулти январӗн 21-мӗшӗ . . . . . . . . 22
Иосиф Виссарионович Сталин . . . . . . . . . 23
Тӑван ҫӗршыв сыхлавҫи . . 27
Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар . . . . —
Ворошилов патне янӑ ҫыру 29
Вуникӗ паттӑр . . . . . . 30
Крещановский лейтенантӑн паттӑр экипажӗ . . . . 31
Фесенко красноармеец фашистсен тыткӑнӗнчен тарни . . . . . . . . . 32
Пӗр талӑк иртсен . . . . 33
Чапаев . . . . . . . . . . 33
Пирӗн чикӗсем хӗрринче пурӑнакан пионерсем . . 35

*стр.*

Тӑшман тыткӑнӗнче . . . 36
Тӑшмана тытни . . . . . 38
Чкалова асӑнса . . . . . . 40
Самолёт ҫинче ураписене ҫӳлелле тӑратса . . . . 41
Ҫичӗ самолёт ҫирӗм икке хирӗҫ . . . . . . . . . 42
Октябрёноксем . . . . . . 44
Ачасене чӗнсе юрланӑ юрӑ 45
Пирӗн колхоз . . . . . . 46
Лаша ӗҫӗ . . . . . . . . . 47
Лаша мӗн ӗҫлет . . . . . 49
Лашана лайӑх пӑх . . . . 49
Ӗне . . . . . . . . . . . 50
Сыснасем . . . . . . . . 51
Пӗл: мӗн вӑл? . . . . . . 52
Автан . . . . . . . . . . —
Кролик . . . . . . . . . 53
Кушакпа йытӑ . . . . . . 54
Ак япала . . . . . . . . . 56
Кашкӑр . . . . . . . . . —
Упа . . . . . . . . . . . 57
Вакша . . . . . . . . . . 59
Кайӑксене ан тытӑр . . . 60
Пӗрре суйсан, тепринче ӗненмеҫҫӗ . . . . . . . —
Вӗреннӗ шӑнкӑрч . . . . 61
Тухтӑр патӗнче . . . . . 62
Таса пурӑнма вӗрен . . . 63
Юмӑҫ пӗтерет, тухтӑр пулӑшать . . . . . . . . 64
Сивӗ енче . . . . . . . . 65
Пӑлан . . . . . . . . . . —
Пӑрсем хушшинче . . . . 66
Челюскинецсем . . . . . . 67
Тӑхӑр уйӑх пӑр ҫинче . . 70
«Седов» ледокол . . . . . 71
Тӑван ҫӗршыв . . . . . . 72
Ӑшӑ енче . . . . . . . . 73

| | стр. |
|---|---|
| Слонпа унӑн ҫури | 74 |
| Ҫуркунне пулать | 75 |
| Тавлашу | 76 |
| Тумтир улшӑнать | 77 |
| Тимӗрҫ | 78 |
| Ҫуркунне | 79 |
| Шӑнкӑрч | 80 |
| Пӑр кайни | — |
| Сентти | 82 |
| Миша шыв арманӗ туни | 83 |
| Ҫуркунне | — |
| Трактор | 84 |
| Хурҫӑ ут | 85 |
| Пыл хурчӗсен юрри | 86 |
| Фабрикӑсемпе заводсем | — |
| Эпӗ хула курни | 88 |
| Автобус | — |
| Пӗр ӗҫ | 89 |
| Колхоз пурлӑхӗшӗн | 90 |
| Пирӗн колхоз мӗн акса тӑвать | 91 |
| Ӗҫ уявӗ | — |
| Майӑн пӗрремӗш кунӗ | 92 |
| Вӑрмана кайни | 94 |
| Хӑраманскер | — |
| Атте пахчи | 95 |
| Пахча тӑшманӗсем | 96 |
| Вӑрманти ҫил-тӑвӑл | — |
| Ҫулла | 97 |
| Ҫуллахи ӗҫсем | 99 |
| Утӑ туни | 100 |
| Панулми | — |
| Ҫырма | 101 |
| Ҫуллахи ҫанталӑк | — |
| Ҫулталӑк хушши | 102 |
| Ҫулталӑкри уйӑхсем | — |
| Тупмалли юмахсен туппи-сем | — |

Редактор *Н. Васянка* Тех. редактор *А. Т. Быков*

НТ 1121 Подп. к печати 18-IX-43 г. Объем 6,5 п. л. Тир. 10.000 экз. Зак. № 541

Отпечатано в типографии № 1 Управления полигр. промышлен. при СНК ЧАССР

г. Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 70 коп.

А. С. ОТАЧКИН

КНИГА ДЛЯ ЧТЕНИЯ
по
РОДНОМУ ЯЗЫКУ

*Часть I*

на чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
Чебоксары — 1943